Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ДЕКАБĔР 5 ТУНТИКУН 279 (5092) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67. ред. замеçтитĕлĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97. Ялхуçалăх пайĕн — 4—97. советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85. Ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Сталинла Конституци ялавĕпе

1936 çулти декабĕрĕн 5-мĕшĕ Совет çĕршывĕн мухтавлă историне ĕмĕр-ĕмĕр асран кайми кун пулса кĕрсе юлчĕ. Вăл кун Сталинла çĕнĕ Конституци социалисăмлă пурнăçăн никам пырса тĕкĕнеймн çирĕп саккунĕ пулса тăчĕ.

Етемлĕх историйĕнче çакăн пек Конституци халиччен урăх пулман. Халиччен пулнă тата халĕ пур буржуалă конституцисем демократи çинчен пушă сăмах çапнипе кăна, халăхсене сăмахпа правасем панипе кăна мухтанма пултараççĕ. Анчах буржуалă тĕнчен пĕр конституцийĕ те халăха чăн-чăн ирĕклĕх гарантилесе памасть, ĕççыннисене çуклăхран, выçлăхран, ĕççĕрлĕхрен хăтармасть. Вăл конституцисен пурин те пĕр тĕллев—капиталисăмлă системăна сыхласа хăварасси, фабрикантсемпе помещиксем политикăлă пуç пулса тăрассине çирĕплетесси, ĕççыннисене пусмăрта тытса усрасси. Ахалтен мар ĕнтĕ Маркс каланă: буржуалă конституци сăмахпа ирĕклĕхсем тата правасем парать, ĕçре вăл ирĕклĕхсемпе правасене хирĕç кĕрешет.

Сталинла Конституци, пирĕн аслă çĕршывăн Тĕп Саккунĕ пулса тăваскер, буржуалă конституцисенчен, социалисăмлă строй капиталисăмлă стройран уйăрăлса тăнă пекех, уйăрăлса тăрать. „Çĕнĕ Конституци... вăл—утса тухнă çулсен итогĕ, кĕрешсе çĕнтерсе илнĕ ĕçсен итогĕ. Апла пулсан, вăл чăннипе мĕн кĕрешсе çĕнтерсе илнине çырса хуни, саккунласа çирĕплетни пулса тăрать" (Сталин).

Пирĕн çĕршывра помещиксен, капиталиссен класне, купцасемпе спекулянтсене,—мĕн пур експлоататăрла классене йăлтах пĕтерчĕ. Пирĕн çĕршывра рабочи клас, хресченсен класĕ тата интеллигенци кăна юлчĕ. „ССР Союзĕнчи рабочи клас вăл—пĕтĕмпех çĕнĕ, експлоатацирен хăтăлнă рабочи клас, уншкал класа етемлĕх историйĕ ку таранччен пĕлменччĕ" (Сталин). Çавăн пекех хресченсен класĕпе интеллигенци те пĕтĕмпех çĕнелчĕç. Çак çĕнĕ рабочи класăн, хресченсен класĕн тата интеллигенцин интересĕсене, вĕсен прависене сыхласа тăрать ĕнтĕ Сталинла Конституци.

Çĕнĕ Конституци тăрăх, ССР Союзĕн политикăлă никĕсĕ—советсем пулса тăраççĕ, унăн економикăлă никĕсĕ—социалисăмлă системă тата производствă хатĕрĕсем социалисăмлă харпăрлăх пулса тăни пулать. Сталинла Конституци пирĕн çĕршывра çĕнĕ суйлав системи туса хучĕ. Суйлавсене пĕтĕм халăх хутшăнать, пур граждансем те суйлавра пĕртан правапа усă кураççĕ. Суйлавсем тÿрех тата вăрттăн сасăланипе пулса иртеççĕ. Çак суйлав системи çĕршыва рабочисемпе хресченсен чăн-чăн вилă демократин çулĕ çине кăларчĕ.

ССР Союзĕ аталанăвăн çĕнĕ тапхăрне, социалисăмлă обшчĕствăна туса çитерни тата çĕнтерÿлĕн коммунисăмлă обшчĕствăна куçса пыни тапхăрне кĕнĕ факта, пĕтĕм тĕнчипе паллă историлĕ факта Конституци çирĕплетсе хучĕ.

Пирĕн çĕршывра обшчĕствăна йĕртсе пырасси обшчĕствăн малта пыракан класĕн — рабочи класăн аллинче, пур нацисемпе расăсем те пĕр пек правасемпе усă кураççĕ, кашни гражданинăн обшчĕстври вырăнĕ хăйĕн пултарулăхĕпе хăйĕн ĕçлевĕнчен тухса тăрать. Хĕрарăмсем пурнăçăн пур облăçĕсенче те арçынсемпе пĕртан правапа тата пур граждансем те пĕртан правапа усă кураççĕ. Сталинла Конституци ĕççыннисене ĕçлев прави, кану прави, ватăлсан материальнăй пулăшу илмели права, вĕренÿ прави, сăмах ирĕклĕхĕ, пичет ирĕклĕхĕ, пухусем, митингсем иртермели ирĕклĕх парать. Çĕнĕ Конституци вăл правасемпе ирĕклĕхсене гарантилесе, вĕсене пурнăça кĕртсе пымали майсене туса парать.

Рабочи класăн чи лайăх представителĕсем—стахановецсемпе ударниксем производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем туса пыраççĕ. Стахановла юхăм—массăлă юхăм, пĕтĕм халăх юхăмĕ пулса тăчĕ. Социалисăмлă ялхуçалăхĕ çулсеренех халиччен пулман тухăçлăхпа тырпул туса илме тытăнчĕ. ССР Союзĕнчи халăхсен содержанипе социалисăмлă, формипе нацилĕ культури вăйлăран та вăйлăрах чечекленсе пырать. Социалисăм çĕнтерессишĕн, капиталисăма тĕп тăвассишĕн пыракан кĕрешÿре епĕр çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пыратпăр. Совет халăхĕ капиталисăмлă йĕритавралăхăн фашисла агенчĕсен — троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла сăтăрçăсен, диверсантсен, шпионсен явисене çĕмĕрсе тăкрĕ, çĕмĕрсе пырать те.

Çĕнĕ Конституци тăрăх, совет халăхĕ иртнĕ çулсенче ССРС Верховнăй Советне, союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйларĕ. Суйлавсем пысăк политикăлă тата производствăлă çĕкленÿпе иртрĕç, вĕсем пĕтĕм халăх праçникĕ, ССРС халăхĕсен аслă туслăхĕн уявĕ пулса тăчĕç. 90 мĕлйун ĕççыннисем хăйсем сасăланипе Совет Союзĕнче социалисăм çĕнтернине çирĕплетсе пачĕç, хăйсен моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне кăтартрĕç. Ку вăл—большевиксен партин, коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ пулчĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсемпе пĕр тăванла çемйере пулса, чăваш халăхĕ те шанчăклăн малалла пырать. Республикăра çулсеренех çĕнĕ савăтсем ÿссе çитĕнеççĕ. Кăçал Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçулĕ ĕçе кĕрет. Вăл чукунçул республикăра промышлĕннăçпа ялхуçалăхне малалла вăйлăн аталанма пысăк майсем туса парать. Пирĕн ялхуçалăхĕ çĕнĕрен çĕршер комбайнсем, трактăрсем тата ытти паха машинăсем туянчĕ, хăйĕн продуктивлăхне хăпартрĕ. Промышлĕннăçра та, ялхуçалăхĕнче те, интеллигенци хушшинче те çĕнĕ стахановецсемпе ĕç маçтăрĕсем çĕршерĕн те пиншерĕн шăтса ÿсрĕç. Чăваш халăхĕ пуян та культурăлă пурнăç патнелле çирĕппĕн утать.

Халĕ кашнин пурăнас килет, ĕçлес те канас килет, кашнин вĕренес килет, кашнин çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн кĕрешес килет. Мĕншĕн тесен кашнине Сталинла Конституци хавхалантарса тăрать. Сталинла Конституци тапхăрĕнче кашни материаллă тата ытти ырлăхсемпе усă курать. Мĕншĕн тесен, кашнин ĕçне, правине, ирĕклĕхне хăватлă та никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар тата Хĕрлĕ Флот сыхласа тăраççĕ.

Ленин—Сталин партийĕ тавра, правительствă тавра тачă пĕтĕçнĕ совет халăхĕ çавăнпа та ССРС Конституцине çирĕплетнĕ куна — декабĕрĕн 5-мĕш кунне аслă праçник туса уявлать. Вăл куна хамăр тăван çĕршыв чиккисен леш енчи пирĕн класлă тăвансем те—пусмăрта пурăнакан мĕнпур ĕççыннисем асра тытаççĕ. Вĕсем експлуататăрсене, пусмăрлакансене хирĕç тăкăлă çапăçăва хатĕрленеççĕ. Вĕсемшĕн Сталинла Конституци — малашнехи ĕçсен программи, вĕсен çулне çутатса тăракан маяк, „ССР Союзĕнче пурнăçа кĕртнине ытти çĕршывсенче те пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме май пуррине кăтартакан документ пулса тăрать" (Сталин).

Совет халăхĕ хăйĕн тивĕçлĕхĕсене манмасть. Вăл хăй çĕнтерсе илнисене никама та нихăçан та парас çук. Вăл пĕлет: малашне те пысăк çĕнтерÿсем туса пырас тесен, „хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала" (Сталин).

„ПСК(б)П Тĕпкомĕ „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановленине пурнăça кĕртесси çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн бÿровĕ 1938 çулти декабĕрĕн 3-мĕшĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ПСК(б)П Обкомĕ, марксисăм-ленинисăм пропагандине урăхлатса çĕнетесси кустарщчинăпа организацисĕрлĕхе пĕтерниччен, пропаганда ĕçне централизацилĕ йĕртсе пымала туниччен, ПСК(б)П историне партири тата партире мар кадрсем харпăрхăй тĕллĕн вĕренессине анлăн сарса яниччен пуçланмала, тесе шутлать. „Кашни коммуниса кружоксенче вĕренесси пĕтĕмпех ирĕклĕ ĕç пулнине ăнлантарса памала" („ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленирен), марксисăм-ленинисăма вĕренмели тĕп метăд харпăрхăй тĕллĕн вĕренесси пулнине ăнлантарса памала.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн решенийĕ тăрăх ПСК(б)П Обкомĕн пропагандă тата пичет пайĕсене пĕрлештерсе, пропагандăпа агитацин (сăмахлă тата пичетри пропагандăпа агитацин) пĕрлĕхлĕ пайĕ тăвас.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕпе райкомсене партн вĕрентĕвĕн кружокĕсен хисепне чакарма, вĕсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн решенине çирĕп пăхăнса организацилеме хушас. ПСК(б)П райкомĕсем тата Шупашкар хула комитечĕн пĕр уйăх хушшинче уйрăм предприятисем, учреждениссем тăрăх тата совет интеллигенцийĕ валли мисе тата мĕнле кружоксем тумалине палăртса йышăнмала, пропагандиссен составне суйласа илсе çирĕплетмеле.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитетне тата райкомсене пурне те марксисăм-ленинисăм, тĕнчери лару-тăру тата ытти ыйтусем тăрăх тăтăшах лекцисем иртерессине практикăна кĕртме хушас.

Кашни районра тата Шупашкар хулинче лекцисем иртерме лайăх хатĕрленĕ аудиторисем тумала (районсенче 1—2 аудитори, Шупашкарта 2—3 аудитори). Икĕ ерне хушшинче ПСК(б)П хула комитечĕпе Обком çумĕнче пысăк квалификацилĕ, теори йĕнчен хатĕрленнĕ юлташсенчен лектăрсен групписене организацилемеле.

ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайне ПСК(б)П историйĕ тăрăх, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе теорилĕ тата политикăлă уйрăм ыйтусем тăрăх тумали лекцисен тематикине хатĕрлеме хушас, лекцисем ĕççыннисен уйрăм ушкăнĕсем валли (учитĕлсем, врачсем, наукă работникĕсем, парти активĕ, совет активĕ, колхоз активĕ, рабочисем т. ыт. валли) пулмала.

ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайне тăтăшах публичнăй лекцисем организацилеме хушас.

ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайне, партии Шупашкар хула комитетне тата райкомсене пурне те парткабинетсен хисепне пăхса тухма хушас, вĕсен ĕçĕсем çинчен хăйсен сенĕвĕсене ПСК(б)П Обкомне тăратмала. Районсенчи парткабинетсене квалификацилĕ кадрсемпе çирĕплетмеле ПСК(б)П райкомĕсен парткабинетсем çумĕнче, квалификацилĕ пропагандиссен вăйĕпе, ялан ĕçлекен группăла тата пĕчченшерлĕ консультаци организацилемеле.

ПСК(б)П Обкомĕ парти организацисене пурне те марксисăм-ленинисăм пропагандинче тĕп, чи вăйлă оружи пулса тăракан пичете хакламаннине пĕтерме, пропагандă ĕçĕнче пичет рольне хăпартма хушать. „Красная Чувашия", „Чăваш Коммунĕ" тата комсомолăн „Çамрăк большевик" хаçатсен редакцийĕсем çумĕнче пропагандă пайĕсем тăвас.

ПСК(б)П райкомĕсене уйăх хушшинчи срукра районри хаçатсемпе нумай тиражлă хаçатсен редакци работникĕсен составне пăхса тухма тата вĕсене квалификацилĕ, тĕрĕсленнĕ юлташсемпе çирĕплетме хушас.

„Ленин çулĕпе" журнал пит кая юлса тухать, парти организацин пайанхи кирлĕ ыйтăвĕсене çутатмасть. ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайне тата „Ленин çулĕпе" журнал редакторне Ахазăв юлташа журнал ĕçĕсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине майлă урăхлатса çĕнетме хушас.

ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайне Чăвашгизпа пĕрле марксисăм-ленинисăм классикĕсен произведенийĕсене кăлармали конкретлă план хатĕрлеме. Чăвашгизăн парти литератури сектăрĕн редакторĕсен кадрĕсене тĕреклетме, çаксем çинчен ПСК(б)П Обком бÿрове ыйту лартма хушас.

ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пĕр уйăхлăх срукра республикăри ял районĕсенче ĕçлемешкĕн яма 20 пропагандисран кая мар суйласа илмеле.

ПСК(б)П Обкомĕ хăйĕн пропагандăпа агитаци пайне, Шупашкар хула комитетне тата райкомсене пурне те ПСК(б)П историйĕ, философи, ССРС халăхĕсен историйĕ, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тата наукăпа техникăн уйрăм ыйтăвĕсем тăрăх халех усă лекцисем организацилес ĕçе пуçлама хушас. Кăштах укçа тÿлесе çÿремели усă лекцисем организацилессине практикăна кĕртес.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленийĕ тăрăх, ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕпе Обком çумĕнче „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" вĕренекен кружоксен пропагандисĕсене валли семинарсем организацилемеле.

ПСК(б)П Обком çекретарĕ

А. ШАКĂВ.

ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ЧАПЛĂ ЛАРĂВĔ

Ĕнер декабĕрĕн 4-мĕшĕнче каçхине Чăвашсен Академилĕ театрĕнче Сталинла Конституцине йышăнни икĕ çул тултарнă ятпа Шупашкар хула совет пленумĕн чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Чаплă ларăвăн хисеплĕ президиумне нумайччен тăвăллăн алă çупса СТАЛИН, МОЛАТАВ, КАГАНОВИЧ, ВОРОШИЛĂВ, КАЛИНИН, МИКОЯН, АНДРЕЙĔВ, ЖДАНĂВ, ЕЖОВ, ХРУЩЧОВ, ДИМИТРОВ, ТЕЛЬМАН тата ХОЗЕ ДИАС юлташсене суйларĕç.

Сталинла Конституцине йышăннăранпа икĕ çул тултарни çинчен Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн президиум председателĕ З. А. Андрейĕва юлташ доклад туса пачĕ.

Чаплă ларăва пухăннă çынсем çав тери пысăк çĕкленÿпе ССРС Конституцине тăваканĕ аслă çулпуç Сталин юлташ патне саламлă çыру ячĕç.

Чаплă лару хупăнать. Залăри çынсем пурте пысăк çĕкленÿпе „Интернационал" юрлаççĕ. Зала Сталин юлташа саламланă сасăсемпе тата тăвăллăн алă çупнипе нумайччен кĕрлесе тăрать.

— Сывă пултăр аслă Сталин! Урра! Музыка каллех „Интернационал" выльать.



Халӑхсен тӑванлӑ союзӗ

ССРС Верховнӑй Совечӗн Национальнӑҫсен Совет председателӗн заместителӗн ЧИМНАЗ АСЛАНӐВА йулташӑн статйинчен

Икӗ ҫул кайарах Пӗтӗм Союзри Советсен Чрезвычайлӑ VIII-мӗш Съесӗ Сталинла Конституцине ҫирӗплетрӗ. Пирӗн тӑван ҫӗршывӑн халӑхсен представителӗсем социализм ҫӗршывӗн ирӗклӗ гражданӗсен демократилӗ прависене ҫирӗплетсе хунӑ Тӗп Саккуна пурте пӗр саслӑх ҫирӗплетрӗҫ.

Сталинла Конституцине йышӑн[illegible] ҫын аслӑ Сталина — аслӑ ҫулпуҫне, пӗтӗм етемлӗхӗн учителне тата тусне — пӗтӗм чӗререн йуратса тав турӗ.

[illegible] лӑхӗ, вӗсен национальнӑҫӗпе расине пӑхмасӑр, пӗтӗм хуҫалӑхӑн, государствӑн, культурӑн тата общӗствӑпа политикӑн пурнӑҫӗнче никам пӑсайми саккун пулса тӑрать.

Граждансен прависене, вӗсен расипе национальнӑҫне пӑха, мӗнле те пулин тӳррӗмӗн йе айаккӑн хӗснӗшӗн, йе тата тӳррӗмӗн йе айаккӑн асларах хувӑшӑн, ҫавӑн пекех тата мӗнле те пулин расӑлла йе нацилӗ мӑнаҫлӑх шухӑш сарнӑшӑн, йе курайманлӑхпа шута-хуманлӑх сарнӑшӑн — саккун хытӑ айӑплать". Ҫакӑн пек ӗнтӗ халӑхсен никам пӑсайми Ленинла-Сталинла туслӑхӗн никӗсӗ.

Патша Российӗ халӑхсен тӗрми пулнӑ. Самодержавин йыттисем пусмӑрлӑхра пурӑннӑ нацисене „инородецсем" тесе калавӑ, ҫав нацисем хушшинче пӗр-пӗрне курайманлӑх, шанманлӑх сарса пынӑ.

Октябрӗрти Социализмла революци пусмӑрта пурӑннӑ халӑхсене етемлӗх историнче пирвайхи хут ирӗке кӑларчӗ, вӗсене ҫӗнӗ социализмлӑ пурнӑҫ патне ҫӗклерӗ. Ленин — Сталин партийӗ, совет влаҫӗ, Сталин йулташ хӑй тӑрӑшнине пула, аслӑ вырӑс халӑхӗ пулӑшса пынине пула, нацилӗ республикӑсенче, облаҫсенче, округсенче социализмла економика туса хунӑ, нацилӗ культурӑ чечекленсе ӳсрӗ.

Пӑхӑр-ха, ордӗнлӑ Азербайджан ҫине! Совет влаҫӗ пулнӑранпа Азербайджан тӗрӗссипех историлӗ ҫула ухса тухрӗ, вӑл патриархалла-феодаллӑ стройрӑн социализм патне ҫитрӗ. Совет Союзӗнчи халӑхсен тӑванлӑ ҫемйинче Сталинла Конституци хӗвелӗн ӑшшинче телейлӗ, савӑнӑҫлӑ пурӑнать Азербайджан халӑхӗ.

Украинӗц тата таджик, белорус тата киргиз, йакут тата чӑваш, грузин тата карел, армйан тата ту[illegible] публикӗсен ҫитенӗвӗсем ҫинчен пӗлеҫҫӗ. Пирӗн нумай нацилӗ пӗрлӗхлӗ государствӑра никам пӑсайми Сталинла туслӑхпа пӗрлешнӗ [illegible]

[illegible] Сталинла наци политикине пурнӑҫа ҫирӗппӗн кӗртсе пырса, ӗлӗк пусмӑрта пурӑннӑ халӑхсене ирӗке кӑларчӗ, вӗсене пӗр-пӗрин ҫине шанса тӑма вӗрентрӗ, пӗр ҫемйене пӗрлештерчӗ. ССРС Верховнӑй Совечӗн, Союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗн суйлавӗсем 170 мӗлйунлӑ совет халӑхӗн морально-политикӑлла пӗрлӗхне ҫав тери вӑйлӑн кӑтартса пачӗҫ.

Фашизмӑн троцкисла-бухаринла тата буржуалӑ-националисла агӗнчӗсем Совет Союзне таткаласа валеҫес, унӑн ирӗклӗ гражданӗсене фашисла ирсӗрсен пусмӑрлӑхне парас ӗмӗтпе халӑхсен аслӑ туслӑхне пӑсасшӑн пулчӗҫ. Совет халӑхӗ вӑл ирсӗрсене ҫӗмӗрсе тӑкрӗ, вӗсен ҫӑхан йӑвисене пӗтерсе хӑйӗн сыхӑлӑхне вуншар хут ӳстерсе пырать, социализм ҫӗнтерӗвӗсем ҫине фашисла ирсӗрсем пырса тапанасран хӑватлӑн астуса тӑрать.

Фашисем пирӗн тӑван ҫӗршывӑн таса чиккисем ҫине тапӑнас мӗн пулсан, нумай нацилӗ Хӗрлӗ Ҫар тӑшман ҫине хаярран тухса ӑна ҫӗр ҫинчен йӑлтах шӑлса пӑрахӗ. Совет халӑхӗ хӑйӗн пурнӑҫӗн, телейӗн иҫекӗн, никама пӑхӑнса тӑрасмарлӑхӗн ҫирӗп никӗсӗ пулса тӑракан Сталинла аслӑ Конституцине кирек мӗнле тӑшманран та сыхласа хӑварма пултарать. Йут ҫӗршыв аттилӗ ҫынсем совет ҫуртне пырса кӗреймӗҫ.

Савӑнӑҫлӑн канатпӑр

Сталинла Конституци ССР Союзӗн гражданӗсене канӑ аслӑ правасенчен пӗри вӑл — кану прави. Ҫак правапа туллин усӑ курма пирӗн мӗн кирлисем пурте пур. Курортсем, санаторисем, канмали ҫуртсем, театрсем, клубсем, садсем, стадионсем Союзра пиншерӗн шутланаҫҫӗ. Вӗсен хисепӗ ҫулсерен ӳссе пырать.

Пирӗн хапрӑкри рабочисем канмалли ҫулах курортсемпе санаторисенче канаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта курортсемпе канмали ҫуртсенче 26 ҫын пулнӑ. Кӑҫал 38 ҫын кайнӑ. Рабочисем сывлӑхӗсене ҫирӗплетсе килнӗ хыҫҫӑн производствӑра татах та лайӑхрах, стахановла ӗҫлеҫҫӗ.

Хапрӑкра стахановла йухӑма пуҫарса йаракансенчен пӗрийӗ А. Лукин йулташ 1936 ҫулта Крымри курортра, 1937 ҫулта тата кӑҫал Ильинкӑри канмали ҫуртра пулчӗ. Халӗ те вӑл плана тӑтӑшах иртерсе тултарать. Лайӑх ӗҫленӗрен ӗнтӗ ӑна станочниксен цех начальникне куҫарнӑ. Верхилейӗв, Федосейӗв йулташсем те отпуск вӑхӑтӗнче курортсенче канса килнӗ хыҫҫӑн паха примерсем кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ.

Епӗ хапрӑкра 1936 ҫултанпа ӗҫлетӗп. Кашни ҫулах отпускра пулатӑп. Кӑҫал, акӑ, Ильинкӑри канмали ҫуртра кантӑм. Аван, питех аван халӗ ӗҫлеме. Сывлӑх ҫирӗп. Нормӑна 200 процентшар тултарса пыратӑп, уйӑхра 700 тенкӗ ӗҫлесе илетӗп.

Пурнӑҫ кашни кунах чечекленсе, лайӑхланса пырать. Спасибӑ, пысӑк спасибӑ телейлӗ пурнӑҫ туса панӑшӑн Сталин аттене!

И. Спирин.

Деткомиҫҫин Шупашкарти хапрӑкӗнчи стахановӗц, ҫамрӑк маҫтӑр.

[illegible] ський, К. И. Чернышӗв, В. В. Смирнов, А. Ф. Федотӑв тата С. С. Федотӑв.

Пирӗн аслӑ правасем

Совет влаҫӗ хӗрарӑмсем ҫинчи пусмӑрлӑха, тӗттӗмлӗхе сирсе пӑрахрӗ. Халӗ пӗтӗм ӗҫхӗрарӑмӗсем арҫынсемпе пӗртан правалӑ. Пирӗн ӗҫлеме, вӗренме, канма, пулӑшу илмелли правасем пур. Вӑл правасен ырлӑхӗпе пурнӑҫра ырӑ куратпӑр.

Епӗ комбинатра 1930 ҫулта ӗҫлеме пуҫларӑм. Вӑл вӑхӑтра кунта тӑрламан бараксемпе цехсен фундаменчӗсем ҫеҫ курӑнса тӑратчӗҫ. Епӗ те вӑл вӑхӑтра тин ҫеҫ ӳсӗм ҫулӗ ҫине тӑна ҫын пулнӑ. Манӑн квалификаци пулман.

Комбинат кунсерен ӳссе пычӗ. Епӗ комбинатпа пӗрлех ӳссе пытӑм. Цехсенче станоксене вырнаҫтарнӑ тӗле „циркуль" станокӗ ҫинче ӗҫлеме вӗрентӗм. Ҫавӑнтан пуҫласа вара хӑвӑрттӑн малалла кайма пуҫларӑм.

Хаӑ акӑ вӑйлӑ станок ҫинче ӗҫлетӗп. Производствӑ планне ытлашшипех тултаратӑп. Ҫавӑншӑн мана стахановка йатне пачӗҫ. Сакӑр ҫул хушшинче вуниллӗк хутчен преми пачӗҫ.

Епӗ тирпейлӗ ҫуртра пурӑнатӑп. Пӳлӗм таса, ӑшӑ. Хаҫат-журналсем килсе тӑраҫҫӗ. Кашни ҫул тенӗ пекех канмали ҫуртра йе курортра пулатӑп.

Райӗҫтӑвком членӗ епӗ. Иртнӗ ҫулта ССРС Верховнӑй Советне суйланӑ вӑхӑтра доверенӑй пулса ӗҫлерӗм. Ҫакӑн пек пысӑк хисеплӗхе, савӑнӑҫлӑ ӗҫе, ырӑ пурнӑҫа мана коммунистсен партийӗ пачӗ. Ҫавӑнпа манӑн пайанки ӗмӗт вӑл — коммунистсен парти ретне кӗрсе Ленинӑн — Сталинӑн аслӑ йалавӗ айӗнче ҫирӗппӗн малала утас ӗмӗт.

Марийа Мйаҫникова.

Куславкка комбинатӗн каскалакан цехӗнчи стахановка.

Ҫамрӑк красноармейӗцсем комсомола кӗреҫҫӗ

Иванов йулташ комиссар пулса ӗҫлекен чаҫра (Мускав ҫар округӗ) кӑҫал килнӗ красноармейӗцсем нумай нацилӗ. Унта вырӑссем, украинӗцсем, казахсем, марийӗцсем т. ыт. те пур. Вӗсенчен нумайӗшӗ Хӗрлӗ Ҫара киличчен тулликмар вӑтам тата вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ.

Ҫамрӑк красноармейӗц Тимошенко ҫара киличчен 7-мӗш класран вӗренсе тухнӑ. Хальхи вӑхӑтра хӑйӗн политикӑлӑ пӗлӳлӗхне пур майсемпе те хӑпартса пырать. Вӗренӳ ҫулӗн малтанхи кунӗсенчех пур предметсемпе те „хорошо" паллӑсемпе вӗренсе пынӑшӑн ӑна командовани икӗ благодарнӑҫ пачӗ. Тимошенко йулташ ленинла комсомол ретне илчӗҫ.

Ҫамрӑк красноармейӗц Ахмат-Бабайӗв Хӗрлӗ Ҫара килсенех, малтанхи кунсенче вырӑс чӗлхипе лайӑх калаҫма та пултараймасчӗ. Ҫак иртнӗ икӗ уйӑх хушшинче вӑл чылай ӳсрӗ. Командирсем пулӑшнипе тата хӑй пӗтӗм вӑйа хурса тӑрӑшса вӗреннипе, Ахмат-Бабайӗв политзанятисенче „хорошо" паллӑсемпе вӗренсе пыма тытӑнчӗ. Нумайах пулмасть вӑл ПСҪЛКС членне кӗчӗ.

Кӗҫӗн командир Зах. Андрейӗв.

ВРАЧ

Ҫанталӑк шӑрӑх тӑнӑ. Кӗтне шывӗ шӑнкӑр-шӑнкӑр йухса выртнӑ. Нимӗнле уйар ҫанталӑкра та парӑнман йуханшыв хӑй тӑрӑххӑн ларса тухнӑ йалсене сахал мар савӑнтарнӑ, мухтантарнӑ. Анчах пӗррехинче, никам кӗтмен ҫӗртенех, ҫак Кӗтне шывӗнчен „мур" ҫӗкленсе тухнӑ. Терӗссипе, вӑл „мур" ӑҫтан тухнине йал ҫыннисем часах пӗлеймен. Врач та тӗлӗннӗ:

— Мӗнле-ха, — тенӗ вӑл, хӑй патне пыракан Йӗпрес, Патӑрйел, Йелчӗк районӗсенчи сӑнран кайнӑ ҫынсем ҫине пӑхса. — Мӗнле-ха пурсӑр та пӗр йышши чирпе чирленӗ?

[illegible] се тӑрасси мар, врач умӗнче тӑракан тӗп задачӑ — ҫынсене хӑвӑртрах сыватасси пулнӑ. Сыватать вӑл. Кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлет. [illegible] уртӑх хисем чирлеҫҫӗ йе сывалнӑ тенисем те тепӗр хут ӳкеҫҫӗ. Пульницӑра вырӑн ҫитми пулать. Шухӑшлать врач: ахальтен мар, ӑҫта та пулсан, пур ку чирӗн сӑлтавӗ — ӑна тупас пулать. Врач разведкӑна тухса кайать. Чирлекен ҫынсен йалӗсем тӑрӑх ӳсрет вӑл, чылайӗшне вырӑнтах васкавлӑ пулӑшу парса хӑварать. Умра — Кӗтне шывӗ. Чирлекенсем пурте тенӗ пек Кӗтне тӑрӑхӗнчи йалсенчен. Врач чи малтанах ҫак шыва илсе анализ тӑвать, сӑнать. Часах вӑрманпромхозне тухса вӗҫтерет. Чир сӑлтавӗ ӑҫта иккенне пӗлтерет. Кӗтне шывӗ ҫине хӳтнӑ курӑс хупписене халех кӑларса ывӑтасси ҫинчен ыйту лартать.

— Йурамасть, йулташ Покровский! — хирӗҫет унпала вӑрманпромхоз пуҫлӑхӗ. — Мӗлйун тенке йахӑн тӑкак пулать вӗт...

Покровский нумай калаҫса тӑмасть. Пуҫлӑха часах ӑнлантарать вӑл;

— Арӑму та чирлӗ?

— Ҫапла-ха та, — тет пуҫлӑх. — Хамӑн та пуҫ ыраткалать...

Мунчала пулмали курӑссене урӑх ҫӗре, вӑрманти кӳлӗсене куҫараҫҫӗ. Кӗтне ҫинчи пӗвесене уҫа-уҫа йараҫҫӗ. Шыв вӑйлӑн кӗрлесе йухать. Шывпа пӗрле „мур" та йухса кайать. Йал ҫыннисем чиртен тасалаҫҫӗ. Пурте Покровский врача тав тӑваҫҫӗ.

Ку ӗҫ вӑл 1924 ҫулта. Покровский врач Турхан районӗнчи Шурут пульницине ӗҫлеме килнӗ ҫул пулса иртнӗ. Кунта киличченех унӑн медицинӑ ӗҫӗнче вунӑ ҫулхи практика пулнӑ. 1914 ҫулта Хусанти медицинӑ университетне пӗтерсе тухнӑ-тухманах ӑна вӑрҫӑ уйне илсе каяҫҫӗ: ӑна емелсен сумккине тыттараҫҫӗ. Хӑй йуратнӑ ӗҫе халӑха мӗнле килӗшнине чи малтанхи хут ҫакӑнта туйса илет ҫамрӑк врач. Пӗтӗм вӑрҫӑ нушинӗ салтаксемпе, хӑйӗн тантӑшӗсемпе пӗрле тӳссе иртерет вӑл: вӗсемпе пӗрле окопсем чавать, тимӗр картасем карать, вӗсемпе пӗрлех тӑшмана хирӗҫ темиҫе хутчен атакӑна кӗрет. Ҫав самантрах аманнисене пулӑшать, темиҫе ҫӗр салтака вилӗмрен хӑтарса хӑварать.

Граждан вӑрҫи пӗтиччен фронтсенче иртерет Покровский. Унтан Йелчӗк пульницин пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлеме пуҫлать. Кунта вӑл чи малтанах хуҫалӑха йӗркене кӳртет. Кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлет. Часах ӑна Шурут пульницине куҫараҫҫӗ. Ку пульницӑ Йелчӗкринчен те ытларах йухӑннӑ пулнӑ. Малтанхи ҫулсенчех Покровский водопровод, канализаци тутарать, хирурги тата акушерски отделенийӗсене аслӑлаттарать. Кунта тӑватӑ ҫул хушши ӗҫлесе вӑл 2156 ҫынна, йавӑр чирленисене, операци тӑвать. Шурут пульници хӑйӗн ӑнаҫлӑ ӗҫӗсемпе республикӑри ытти йалсенчи пульницӑсенчен чи малти вырӑна тухать. Покровский йулташа Мускава, ССР Союзӗн Сывлӑха сыхлав халӑх комиссариатне докладпа чӗнсе илеҫҫӗ. Унӑн докладне учонӑйсем, профессӑрсем, доктӑрсем, паллӑ хирургсем итлеҫҫӗ. Хӑйӗн пӗлӳлӗхне татах та ӳстерес тӗлӗшпе Покровский аслӑ хирургсем патӗнче виҫӗ уйӑх хушши вӗренӳре пулать. Ӑна Шурут пульницине лартма хирурги ӗҫӗнче ҫав тери [illegible] парга премилеҫҫӗ.

1928 ҫулта йаланлӑхах пурӑнма Улатӑр хулинчи пульницӑна куҫать. Кунта вӑл хирурги отделенийӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлес. [illegible] ци тунисем те кӗреҫҫӗ. П. М.) Сывалса тухнисем Покровскине тав туса хӑй патне тата районри хаҫат редакцине, ытти учрежденисене те нумай ҫырусем ҫыраҫҫӗ.

„Епӗ хырӑм чирӗпе чылай вӑхӑт хушши асапланнӑ хыҫҫӑн Покровский патӗнче пултӑм, — тесе ҫырать Алтышӗвӑ йалӗнчи Солдатӑв колхозник. — Вӑл мана операци турӗ. Халӗ епӗ сывӑ. Пур ӗҫе те ытти колхозниксемпе пӗрлех ӗҫлесе пыратӑп. Тавтапуҫ совет пульницине, тавтапуҫ унта ӗҫлекенсене. Ӗлӗкхи саманара пулсан епӗ хамӑн сывлӑха ҫапла хӑвӑрттӑн йусас тесе ӗмӗтленме те май пулас ҫукчӗ..."

„Мана ӑнсӑртран пульӑ лекрӗ, — тет милици управленин сотрудникӗ Пирогов. — Пульӑ чӗрене витсе тӑракан ҫурхаха шӑтарса кайнӑ пулнӑ. Мана, вилнӗ пекех ӑнсӑрланнӑскерне, Покровский патне илсе кайнӑ. Вӑл операци тунӑ хыҫҫӑн икӗ ернеренех сывалса, ӗлӗкхи пекех ӗҫе йурӑхлӑ ҫын пулса тухрӑм..."

Трахомпа кӗрешес ӗҫре те сахал мар вӑй хурать Покровский.

„Пирӗн йала Покровский врач килсе икӗ ерне пурӑнчӗ, — тет Суйкӑнри трахработник Абликӑв Димитрий. — Вӑл вӑхӑтлӑха пурӑнакан пӳрт амбулотори пек пулса тӑчӗ. Ун патне хамӑр йалтан ҫеҫ мар, Ҫӗнӗ Ейпеҫ йалӗнчен те килме пуҫларӗҫ. Икӗ ерне хушшинче Покровский 213 ҫын куҫӗсене операци турӗ. Пире, трахработниксене, консультаци парса хӑварчӗ. Епӗр унпа йаланах ҫирӗп ҫыхӑну тытатпӑр. Кирек хӑҫан та вӑл пире пысӑк пулӑшу парса тӑрать..."

Ҫапла ӗҫлет пирӗн республикӑри талантлӑ врачсенчен пӗри Михаил Владимирович Покровский. Вӑл медицинӑ ӗҫне пуҫӑнни ҫитес йанвар уйӑхӗнче 25 ҫул тулать. Общӗствӑ ӗҫне те активлӑн хутшӑнать Покровский. Вӑл — хула совечӗн членӗ, сывлӑха сыхлав секцин руководителӗ. Пульницӑри чылай сотрудниксем ун патне кулленех ӗҫри ыйтусемпе ҫеҫ мар, политикӑлӑ ыйтусемпе те, парти историне вӗреннӗ май сиксе тухакан хӑш пӗр ыйтусемпе те час-часах консультаци илме пыраҫҫӗ. Покровский пурне те пысӑк хаваспа йышӑнать, пурне те мӗн кирлӗ таран ӑнлантарса парать.

— Йурататӑп массӑ хушшинче ӗҫлеме, — тет Покровский. — Халӑх ӗҫне хутшӑнса, вӑл ӗҫре халӑх хисепне илтме тивӗҫлӗ пулнишӗн калама ҫук савӑнатӑп.

Улатӑр хули. Петӗр МИТТА.

Виҫӗ ҫӗр кӗвӗ пӗлет

Сиккассинчи (Канаш р.) вӑтам шкулта 9-мӗш класра вӗренекен Никитин йулташ хӑйӗн гармонӗпе 300 кӗвӗ калама пӗлет. Вӑл таша кӗввисене те, йурӑ кӗввисене те лайӑх выльать.

Никитин йулташ вӑтам шкул сумӗнчи шавлӑ оркестрӑн руководителӗ. Хӑй пӗлекен пур кӗвӗсене те шавлӑ оркестр кружокӗнче тӑракансене вӗрентме тӑрӑшать.

И. ПАЙТАШ.

Сталинла Конституцишӗн!

Хасан кӳлли патӗнче ҫапӑҫура пулнӑ лейтенант-орденоносӗц Ф. К. Пушкин йулташ каласа панинчен

Хасан кӳлли патӗнче пулса иртнӗ событисем ҫинчен, вӑл ҫапӑҫура аслӑ Совет халӑхӗн Хӗрлӗ Ҫарӗ Йапони самурайӗсене ҫапса аркатни ҫинчен халӗ пӗтӗм тӗнче пӗлет ӗнтӗ. Совет халӑхӗ хӑйӗн ҫӗршывӗн вӑйӗпе тӗрекне, политикӑлӑ тата моральлӗ пӗрлӗхне, хӑйӗн Хӗрлӗ Ҫарӗ никам ҫӗнейми вӑй пулса тӑвине пӗтӗм тӗнче умӗнче тепӗр хут кӑтартрӗ.

Урса кайнӑ фашиссем пирӗн социализмла ҫӗршыв ҫине тапӑнса пӑхрӗҫ. Вӗсем пирӗн Совет правителствин тулашӗнчи политикине тата Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫапӑҫу хӑватне „сӑнаса" пӑхма шутларӗҫ. Германи тата Итали фашисӗсем ӗшкӗртнипе ҫак „сӑнас" ӗҫе Йапони самурайӗсем хӑйсем ҫине илчӗҫ. Вӗсем ийулӗн 29-мӗшӗнче пирӗн чикӗ урлӑ каҫса, Безымйаннайа высота патӗнчи пограничниксем ҫине тапӑнчӗҫ.

Вӑл высотара 11 пограничник хуралра тӑнӑ. Вӗсем ҫине чи малтанах пӗр ротӑ тапӑннӑ. Вӑйсем пӗр пек мар пулин те, пирӗн пограничниксем самурайсене хирӗҫ тӗлӗнмеле паттӑрлӑхпа ҫапӑҫрӗҫ. Акӑ пӗр пример. Красноармейӗц Роман Лесняка самурайсем хупӑрласа илеҫҫӗ. Лесняк ҫухалса ӳкместь, самурайсене хирӗҫ тӗл перет, гранатсем ывӑтать, тӑшмана ҫӗмӗрет. Ун ҫине офицер тапӑнать. Роман Лесняк хӑйӗн пӑшалӗпе тӗллет, анчах... осечкӑ. Вара нимӗн чухлӗ те хӑрамасӑр Лесняк офицер ҫине тапӑнать, винтовкӑ штыкӗпе офицер пырне тирсе, тӑшмана ҫавӑрса ҫапать.

Совет пограничникӗсене пулӑшса, Йапони самурайӗсене ҫӗмӗрсе тӑкма пирӗн дивизине хушрӗҫ. Партипе правителствӑ пирӗн ҫине ҫакӑн пек пысӑк шанӑҫ хунӑшӑн епӗр питӗ савӑнтӑмӑр. Пурсӑмӑр та алла хӗҫпӑшалсене тата хӗрлӗ йалав тытса Сталин йулташӑн сӑмахӗсемпе:

— Пире йут ҫӗр пӗр пусӑм та кирлӗ мар. Анчах хамӑр ҫӗре те, хамӑрӑн пӗр вершук ҫӗре те никама та памастпӑр, — тесе тупа турӑмӑр та вырӑнтан тапрантӑмӑр.

Пирӗн дивизи чикӗрен чылай инҫе вырӑнта тӑнӑ. Умри ҫул — йавӑр ҫул. Кунта тӑршшӗпех шывшурлӑх, тӳрӗ тата такӑр ҫулсем, кӗперсем ҫук. Пӗр ҫухрӑм кайма та темӗн чухлӗ чӑтӑмлӑх тата вӑй кирлӗ. Дивизи командованийӗ боецсене ҫапӑҫӑва кӗриччӗнех ывӑнтарас мар шутпа, ҫул ҫинче час-часах канма привалсем тума хушрӗ. Анчах боецсем ҫул ҫинче командирсенчен часрах тата хӑвӑртрах ҫапӑҫӑва илсе кайма ыйтрӗҫ.

— Социализм ҫӗрӗ ҫинче тӑшман пӗр ҫекунд та ан пултӑр. Пирӗн Безымйаннайа тата Заозернайа высотасем ҫинче халех, халех йалав ҫӗклемелле! — кашни боецӑн чӗри ҫак ӗмӗтпе тулнӑ, вӑл пире ҫӗнтерӳсем патне кайма хавхалантарчӗ, вӑй-хӑват пачӗ. Пирӗншӗн епӗр ҫӗнтереймен йавӑрлӑх ҫук.

Ҫапӑҫӑва кӗрес умӗн боецсем хушшинче ҫӗкленнӗ хастарлӑха каласа пама та сӑмах ҫитмест. Пӗр подразделенинче кӑна 272 ҫын комсомол ретне илме ыйтусем пачӗҫ. „Епӗ Ленин-Сталин партишӗн, Сталинла Конституцишӗн, социализмла ҫӗршывӑн тӗрекӗпе хӑвачӗшӗн, унӑн мухтавӗпе чысӗшӗн комсомол членӗ пулса ҫапӑҫасшӑн, — тесе ҫыраҫҫӗ вӗсем хӑйсен зайавленийӗсенче. Парти ретне кӗме тата Хӗрлӗ Ҫарта ӗмӗрлӗхе хӑварма ҫӗршер боецсем зайавленисем пачӗҫ.

Августӑн 6-мӗшӗ. Вырӑна ҫитсе ҫапӑҫӑва кӗме хатӗрленетпӗр. Снайпӗрсем — хӑйсен винтовкисене, пулемечӗсене, артиллериссем — хӑйсен орудийӗсене, пӗр сӑмахпа каласан, пурсӑмӑр та хамӑрӑн ҫапӑҫури тусӑмӑрсене тепӗр хут тӗрӗслерӗмӗр. Совет халӑхӗ панӑ хӗҫпӑшал — шанчӑклӑ хӗҫпӑшал, вӑл шанчӑклӑ алӑра. Вӑл пирӗн, Совет халӑхӗн чи лайӑх тата тӳрӗ ывӑлӗсен аллинче.

— Сталинла... Конституцишӗн, аслӑ ҫулпуҫ Сталиншӑн, социализмла ҫӗршывӑн аслӑ халӑхӗшӗн — малала! — терӗҫ пирӗн командирсем. Епӗр ҫӗнтерӳ пирӗнте пулассине пӗтӗм чӗререн ӗненсе, Ленин — Сталин партийӗ, Совет правителстви тата пӗтӗм совет халӑхӗ шанӑҫӗпе хавхаланса пӗр харӑс „Урра!" кӑшкӑртӑмӑр, атакӑна кӗрсе кайрӑмӑр.

Аслӑ ҫулпуҫ Сталин йулташ йачӗ пире ҫӗнтерӳ патне илсе пычӗ, вӑйпа хӑват пачӗ, паттӑр кӗрешме хӑйулӑхпа хастарлӑх кӳчӗ, нимӗнле йавӑрлӑхран та хӑрамӑн чӗреллӗ турӗ. Сталин йачӗпе, Сталинла Конституци йалавӗпе паттӑрла ҫапӑҫрӑмӑр. Социализм ҫӗрӗ ҫинче пӗр самурай йулмиччен ҫапса аркатрӑмӑр. Безымйаннайа тата Заозернайа высотасем ҫинче никам ҫӗнейми хӗрлӗ йалава ҫӗклерӗмӗр.

Йапони самурайӗсене хамӑр ҫӗршывран тасатсан, вӗсем чавӑнса выртнӑ окопра ҫыру тупрӑмӑр. Пӗр салтак „Хӗрлӗ Ҫар пире офицерсем каласа панӑ пек мар, вӑл вӑйлӑ, вӗсен аллинче хӑватлӑ техникӑ, ҫынӗсем те йӑлтах урӑхла. Вӗсене нийепле вӑйпа та хирӗҫме май ҫук. Вӗсем тем пек пысӑк йавӑрлӑх умӗнче те, чарӑнса тӑмаҫҫӗ. Вӗсене хирӗҫме пирӗн вӑй ҫук, нихӑҫан та пулас ҫук", — тесе ҫырать вӑл.

Йапони ҫарӗ ҫирӗп мар тата пӗрлӗхлӗ мар. Акӑ пӗр пример. Килӗшӳ тӑвас тӗлӗшпе ҫар представителӗсем хушшинче калаҫу пынӑ вӑхӑтра, пирӗн пата красноармейӗцсен йуррисемпе ташшисен ансамблӗ пычӗ. Вӗсем пӗр пысӑк уҫланкӑна вырнаҫрӗҫ те концерт пама хатӗрленчӗҫ. Самурайсем ҫакна курнӑ. Вӗсем Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнӗ вӑй пухса тапӑнма хатӗрленет тесе шутланӑ пулас та хӑйсен чаҫӗсене пирӗн чикӗсем патнех илсе пычӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах ансамбль хӑйӗн концертне пуҫларӗ. Йапони офицерӗсем тӗлӗнсе кайнипе вим тума та аптӑрарӗҫ пулас. Совет халӑхӗн йуррисене вӗсен салтакӗсем тимлӗн итлеме пуҫларӗҫ. Кашни йурӑ хыҫҫӑн пирӗн боецсемпе пӗрле Йапони салтакӗсем те тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ. Офицерсем ӑнран ӳксех, хӑйсен салтакӗсене кайала хӑвалама, алӑ ҫупакансене хӗнеме, пеме пуҫларӗҫ. Апла пулин те, пирӗн ҫӗнтерӳ йуррисен кӗввисем чикӗ урлӑ каҫса инҫете илтӗнчӗ.

Вӗсем атакӑна кайнӑ чух „банзай" тесе кӑшкӑраҫҫӗ. Епӗр „Урра" кӑшкӑрса хирӗҫ атакӑна кӗрсен Йапони салтакӗсем кайала тараҫҫӗ. Таракансене офицерсем пушӑпа хӗнеҫҫӗ, пере-пере вӗлереҫҫӗ. Тата вӗсем йаланах ӳсӗр. Атакӑна кайас умӗн салтаксене ӗҫтерсе ӳсӗртеҫҫӗ мӗн. Ерех, пушӑ, офицер пульки — акӑ мӗн ҫинче тытӑнса тӑрать вӗсен дисциплини.

Йапони ҫарӗн ҫапӑҫу хӑвачӗ те, ҫар техники те пирӗннипе танлаштарсан пит начар. Кӑна ҫак пример та лайӑх кӑтартса парать. Пӗр красноармейӗц походнӑй кухньӑпа, тепӗр вырӑна кайать. Кухньӑ трубинчен хура тӗтӗм мӑкӑрланнӑ. Ҫакна самурайсем курнӑ та, „дымовая завеса" тесе шутланӑ пулмалла, тупӑсенчен кухньӑ ҫине пеме тытӑннӑ. Красноармейӗц лӑпкӑн, хусканмасӑр йӗри-тавра пӑхать те, кухньӑ трубине витрепе хуплать. Тӗтӗм пушшех сарӑлса кайать. Вара самурайсем тулхӑрса кайсах умлӑн-хыҫлӑн пеме пуҫларӗҫ. 12 снарйад тӑкрӗҫ, ҫапах та кухньӑна тивертеймерӗҫ. Красноармейӗц йурла-йурлах иртсе кайрӗ.

Пирӗн мухтавлӑ та хӑватлӑ Хӗрлӗ Ҫар — совет халӑхӗн ҫарӗ. Пирӗн совет халӑхӗн ывӑлӗсемшӗн нимӗнле йавӑрлӑх та хӑрушӑ мар. Йаланах епӗр ҫӗнтерне, ҫӗнтеретпӗр те. Никам ҫӗнейми Маркс — Енгельс — Ленин — Сталин йалавӗ пирӗн алӑра. Вӑл йалавпа 1917 ҫулта Российӑри ӗҫҫыннисем ирӗке тухрӗҫ, хӑватлӑ социализмла державӑ турӗҫ, социализм ҫӗнтерӗвӗн Конституцине ҫирӗплетрӗҫ. Епӗр Сталинла Конституцине, унӑн тивлечӗпе телейлӗ пурӑнакан совет халӑхне хамӑрӑн куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек сыхлатпӑр.

М. Йакимӑв.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Хасан кӳлли районӗнчи ҫапӑҫусен участникӗсем. Совет Союзӗн Геройӗ Д. Т. Левченко лейтенант (сулахайри) тата орденоносец-пулеметчик А. В. Гальйанӑв, — вӑл пӗччӗнех Йапони самурайӗсене ҫӗр ҫын ытла вӗлернӗ.

(Союзфото).

Çул уçă

Пирĕн Евтепе йалĕнче (Йелчĕк районĕ) ĕлĕк чиркӳ прихут шкулĕ пурччĕ. 1906 çулта епĕ унта вĕренме кĕтĕм. 1910 çулта вĕренсе тухрăм. Манăн татах та вĕренес кăмăлăм пулнă, анчах малала вĕренме май килмерĕ. Пĕр çул хушши сысна кĕтĕвĕ пăхнă хыççăн, 1911 çулта, Хурăн-Варти икĕ класлă шкула вĕренме кĕрес тесе кайрăм. Вĕреннĕшĕн укçа тӳлеймерен мана шкула илмерĕç. Попсемпе кулаксем хăйсен ачисене вĕренме кĕртес шутпа пĕр уйăх малтанах укçа тӳлесе хунă. Манпа пĕрлех шкула кĕме Кушников Григори те пычĕ. Вĕсен ашшĕ пĕр сурăх тата 10 тенкĕ укçа тӳленĕ. Сахал тӳлевине кура пĕр уйăх вĕренсен ăна та шкултан кăларса йачĕç. Епĕр вĕсенчен те чухăн пурăнаттăмăр. Пиччепе çăвĕпе кĕтӳ кĕтсе те 25 тенкĕ анчах илеттĕмĕр. Вăл укçана кĕтӳ кĕтме пуçличчен малтанах илсе çитереттĕмĕр.

1912 çулта Пăва уйезĕнчи Пăва хуливчи ремесла шкулне вĕренме кайрăм. Кунта мана слесăр ĕçне вĕренмели уйрăма илчĕç. Уйăх çурă вĕренсен укçа тӳлеме ыйтрĕç. Уйăхне 2 тенкĕ те 85 пус тӳлемеле мĕн. Анчах епĕ тӳлеймерĕм, çавăнпа шкултан кăларса йачĕç. Маншăн ку шкул алăкĕ те хупă пулчĕ.

Çапла ĕнтĕ патша влаçĕ чухăнсен ачисене вĕренме ирĕк паман. Чĕререн вĕренме тăрăшсан та, ĕмĕте пӳлсе хунă. Совет влаçĕ пур ĕççыннисене те вĕренме çул уçса пачĕ. Çакна май епĕ те вĕренсе пыма тытăнтăм. Колхозра ĕçленĕ чухне пĕрмайах районри колхоз активĕн шкулне çӳрерĕм. Хам тĕллĕн нумай вĕренсе пытăм. 1936 çулта мана Чăвашсен коммунисла Ăслă йалхуçалăх шкулне илчĕç. Анăçлă вĕренсе пыма кирлĕ условисене пурне те туса пачĕç. Епĕ пур предметсемпе те лайăх паллăсемпе вĕренсе пыратăп. Ударниксен шутĕнче тăратăп.

Сталинла Конституцире ĕççынвисен аслă прависене ылттăн саспаллисемпе çырса хунă. Вăл правасемпе епĕр туллин усă куратпăр. Паллах ĕнтĕ çак аслă правасене вăйлă кĕрешӳре çĕнсе илнĕ, тата вĕсене пурнăçламали условисене те туса панă. Государства вĕренекенсене стипенди парса тăрат, лайăх общежитисенче усрат.

Правительство халăха вĕрентес ĕçе çулран-çул ытларах укçа расхутлат. Çамрăксемшĕн вĕренӳ çулĕ уçă. Манăн ачасем те хам пекех вĕренӳ правипе туллин усă куraççĕ. Аслă ывăл Валентин кăçал Патăрйелĕнчи педагогика училищине кĕчĕ. Тата икĕ ача йалти туллимар вăтам шкулта вĕренеççĕ.

Епĕ хĕрĕх пĕр çул тултартăм. Тепĕр уйăхран аслă шкултан вĕренсе тухатăп. Шкулта çĕнĕ вăй пухрăм. Марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕпе хĕçпăшаллантăм. Часах ĕнтĕ пире парти ответлă ĕççене йарат. Шкулта илнĕ пĕлĕве епĕ практикăра тивĕçлипе пурнăçласа пырăп.

Орденоносĕц А. В. ТАБАКОВ.

Чăвашсен коммунисла аслă йалхуçалăх шкулĕн студенчĕ.

Вĕренӳ прави

Социалисăм çĕнтерӳĕ çĕршывăн Сталинла Конституцийĕ çине рабочи класпа колхоз хресченĕсем Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе кĕрешсе илнĕ чаплă çĕнтерӳсене çырса хунă.

„ССРС гражданĕсен вĕренӳ прави пур. Ку права — пуçламĕш шкулсенче пурне те обязательнă йĕркепе вĕрентнипе, пур шкулсенче те, вăл шутра аслă шкулсенче те, тӳлеттермесĕр вĕрентнипе, аслă шкулсенче вĕренекенсене пурне те пекех государствă стипендийĕсем парса тăнипе, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентнипе, савăтсенче, совхозсенче, машинă-тракторлă станцисенче тата колхозсенче ĕççыннисене производства, техника, агрономи ĕçне тӳлеттермесĕр вĕрентнипе пурнăçа кĕрсе пырат" (ССРС Конституцийĕ, 121-мĕш статйа).

Социалисăм çĕршывĕ анчах хăйĕн тĕп Саккунĕ çине çакăн пек правасем çырса хума, çырса хума çеç мар, тата пурнăçа кĕртме пултарат. Ку таранччен етемлĕхĕн чи лайăх ăсĕсем те çакăн пек правасем çинчен ĕмĕтленме çеç пултарнă. Совет Сойузĕнче çак ĕмĕтсем пурнăçа кĕнĕ чăнлăх пулса тăчĕç.

Патша правительстви культурăна пăвса хурас, тĕн тĕшмĕшлĕхне вăйлатас, нацисене пусмăрлас политика тытса пынă. Ĕлĕкхи вăхăтра халăха „сутта кăларас" ĕçре „тĕп вырăнта" поп тăнă. Вăл ĕççыннисене пусмăрлакансен пусмăрне чăтма, пăхăнма, йуратма вĕрентнĕ. Пĕтĕм пуçламĕш шкулсенчен çурри—чиркӳпе прихут шкулĕсем пулнă, вĕсене те пулин попсем пăхса тăнă. Шкулсене государствă йенчен нимĕнле пулăшу та пулманнă пĕрех, вĕсене халăхăн хăйĕн тытса тăмала пулнă.

Революцичченхи Российăра хут пĕлекенсен хисепĕ пурĕ те 27 процент кăна пулнă. Нацилĕ районсенче шкулсем пулманпа пĕрех, пулсан та вĕсенче вырăсла кăна вĕрентнĕ. Патша правительстви пур нацисене те вырăслатас политика тытса пынă.

Халăха вĕрентес ĕç ваљљи патша правительстви тăкак питех те сахал кăларнă. Хăшпĕр округсенче халăха вĕрентес ĕç ваљљи çын пуçне султалăка та 4.1 пус çеç тăкак тухнă.

Ĕççыннисемшĕн вăтам шкулта вĕренесси те телейлисен тивлечĕ кăна пулнă тапхăртан пире çирĕм пĕр çул хушши вăхăт уйăрса тăрат. Октябĕрти Социалисăмла Аслă революцирен вара пирĕн çĕршывра халăха сутта кăларас ĕç анлăн сарăлса карĕ. Совет Сойузĕнчи тĕрлĕрен шкулсенче 40 мĕлйун çын ытла вĕренет, ку вăл Совет Сойузĕнче пурăнакан пĕтĕм халăхран чĕрĕк пайĕ шкулсенче вĕреннине пĕлтерет.

Совет Сойузĕнчи аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ Йевропăри пысăк государствăсемпе Япониври аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕнчен иртет.

Совет государстви халăха вĕрентес ĕçе укçа-тенкĕ нумай хыват. Пирĕн правительствă патша правительстви 1913 çулта халăха вĕрентес ĕçе укçа-тенкĕ хывнинчен 110 хут ытларах хыват. 1938 çулта государствă бӳджечĕ тăрăх халăха вĕрентес ĕçе 20.1 мĕлйард тенкĕ панă.

Совет Сойузĕнче вĕренӳ прави пур халăхсемшĕн те пĕр пек.

Пур çĕрте те тăван чĕлхепе вĕрентеççĕ. Ĕлĕк хăйсен çырулăхĕ пулман халăхсем Совет влаçĕ вăхăтĕнче çырулăх тупăнчĕç. Нумай йышлă пысăк квалификацилĕ нацилĕ кадрсем тунă.

Совет Сойузĕнчи халăхсен пĕрлĕх çемйинче Ленин орденлĕ Чăваш республикĕ Сталинла Конституцине йышăнни икĕ çул тултарнине хуçалăхпа культурă строительстви фронтĕнче пысăк çитĕнӳсем тупнипе кĕтсе илет. Патша йĕрки вăхăтĕнче чăваш халăхĕ тĕттĕм, мĕскĕн, чухăн, хут пĕлмен халăх пулнă. Чăваш хушшинче хут пĕлменнисен хисепĕ 83 проц. пулнă.

Ĕççынни ачисем аслă шкулсене мар, вăтам шкулсене те лекме пултарайман.

Халăха вĕрентме укçа сахал панă, анчах ун вырăнне вара чиркӳсемпе мăнастырсем туса тытса тăма мĕлйуншар тенкĕ панă. 1897 çулти перепиç кăтартнă тăрăх, пĕтĕм Российĕпе учительсем пурĕ те 79 пин çын, инженерсем—4 пин, врачсем—17 пин çын пулнă. Ун вырăнне вара попсемпе чиркӳ çыннисем кĕтĕвĕпех пулнă, вĕсен хисепĕ (295 пин) учительсенчен тăватă хута йахăн ытларах пулнă.

Совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе нумай йышлă тăшмансене, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсене хирĕç кĕрешсе хăйне валљи савăнăçлă та телейлĕ пурнăç ичĕ.

Телейлĕ Совет çĕршывĕнче партипе правительствă халăха сутта кăларассишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлессĕ. Вĕренӳ правине пурнăçа кĕртме кирлисене пирĕн çĕршывра пурне те туна.

Чăваш республикĕнче халљхи вăхăтра пуçламĕш шкулсем 636. туллимар вăтам шкулсем 336. вăтам шкулсем 81. техникумсем 29. Туллимар вăтам шкулсемпе вăтам шкулсем валљи учительсем хатĕрлеме педагогикăпа учительсен институчĕсем ĕçлессĕ. Йалхуçалăх институчĕ. коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕ пур. Пĕтĕмпе шкулсенче 184.5 пин ача. техникумсенче 7.7 пин çын вĕренессĕ.

Ĕлĕкхи вăхăтра чăваш ĕççыннисем аслă шкулсенче вĕренесси çинчен ĕмĕтленме те пултарайман пулсан. халĕ Чăваш республикĕнче кăна аслă шкулсем 4.

Культурă учрежденисем йышланса пыраççĕ. Республикăра 5 театр, 14 кинотеатр, 100 ытла кинопередвижкăсем ĕçлессĕ. Хуласемпе йалсенче 80 библиотекă уçнă. Йалсенче 629 вулав çурчĕ ĕçлет. Республикăра 45 хаçат тухат. Наукă учрежденисем ĕçлессĕ.

1938 çулта халăха вĕрентес ĕçе Чăваш республикĕнче 681.335 тенкĕ кайат. Çак цифрăсем вĕсем пурте Чăваш республикĕ культурă фронтĕнче пысăк çитĕнӳсем тунни çинчен калаççĕ.

Капиталисăм тĕнчинче фашисăм халăхсене вăтам ĕмĕрсенчи тискерлĕхсем патне илсе пынă, культурă кĕрешсе илнисене çĕмĕрсе пынă вăхăтра, реакци „демократилĕ" текен çĕршывсенче хăйĕн пуçне çĕклесе фашисăмпа пĕрлешнĕ вăхăтра социалисăм çĕршывĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывĕ—Совет Сойузĕ наукăна нихçан пулман сулĕ пусăма çĕклет, ăна ĕççыннисен интересĕшĕн ĕçлеттерет, вĕренӳве çĕршывăн производительлĕ вăйĕсене çĕклентерсе, халăхсен пурнăçне лайăхлатса пымали хăватлă услови туса пырат.

Тăшмансене хирĕç хайаррăн кĕрешсе, експлоататăрла классемпе вĕсен агенчĕсене — троцкиссене, бухаринĕçсене, буржуалă-националиссене çĕмĕрсе тăкса большевиксен партийĕ аслă Сталин йертсе пынипе Совет çĕршывне социалисăм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерчĕ.

В. ХАРИТОНАВ.

ЧАССР Çутĕç Халăх комиссарĕ.

Телейлĕ çемйе

Нумайранпа ĕçлекен учитĕл Михаил Никифăрăвич —Канаш районĕнчи Шакăл вăтам шкул директăрĕ хăйĕн ачисемпе саванат.

Унăн халĕ сакăр ача. Ачисем хăй пек асаплă вăхăтра мар, Совет влаçĕ вăхăтĕнче. Сталинла телейлĕ саманара ӳссе çитĕнеççĕ. Чи аслă ывăлĕ Леонид—Канашри вакунсем йусакан савăтри грузчик, паллă стахановĕц. Ваçилий—педучилищăран вĕренсе тухнă. Канаш райсутĕç пайĕнче инструктăрта ĕçленĕ,—халĕ райсутĕçпайĕн пуçлахĕ. Валентинă—учительсен институтĕнчен вĕренсе тухнă. Шăмăршăри вăтам шкулта ĕçлет. Александрă—Мускаври педагогика институтĕнче йулашки çул вĕренет. Аркадий—педагогика училищинчен вĕренсе тухнă, ашшĕпе пĕрле Шаккăлти вăтам шкулта ĕçлет, вырăс чĕлхине вĕрентет. Борис—Шаккăлти вăтам шкулта тăххăрăмĕш класра вĕренет, вĕренӳ ударникĕ. Нонна—пиллĕкмĕш класра вĕренет. Чи кĕçĕнни Ренадă—кăçал çеç шкула кĕнĕ-ха.

Çак ĕнтĕ вăл Сталин саманинчи телейлĕ çемйе. Совет интеллигенци çемйи. Ачисем пиллĕкĕшĕ комсомол ретĕнче тăраççĕ. Вĕсем Сталин аттене телейлĕ пурнăç туса панăшăн чĕререн тав тăваççĕ.

Михаил Никифăрăвич аллă çултан иртнĕ. Апла пулин те вăл общественлă ĕçсенче хастарлă ĕçлет. ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлав кампанинче округри суйлав комиççи членĕ, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанинче участкăри суйлав комиççи председательĕн заместителĕ пулнă. Вăл лайăх агитатăр. 1939 çулта пулакан халăх перепиçĕ çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен пĕрмайах тĕплĕн ăнлантарса парат.

А. Йазыкăв.

Икшер нормă

Водопйанăв йачĕпе тăракан тирсăран савăтĕнчи (Шупашкар хули) рабочисемпе работницăсем Сталинла Конституци кунне хатĕрленнĕ май ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Чылай рабочисем сменăра икшер нормă тултарса пыраççĕ. Акă, декабĕрĕн 2-мĕшĕнче Ленин йачĕпе тăракан бригадă членĕ И. Михайлăв йулташ нормăна 255 процент, раскройнăй цехри Йе. Майорăвă 241 процент, М. Йефимăвă 236 процент тултарнă. Çак кун мартăн 8-мĕш йачĕпе тăракан бригадă (бригадăра 23 çын) плана 123 процент тултарнă.

И. Федăрăв.

Планран иртерсе

Шупашкарти спирт савăчĕн коллективĕ Сталинла Конституци кунне çулталикри производствă планне 116 процент ытларах тултарнипе кĕтсе илчĕ.

Савăт халљхи вăхăтра татах та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Акă, савăт плана декабĕрĕн 1-мĕшĕнче 125 процент, декабĕрĕн 2-мĕшĕнче 121 процент тултарчĕ.

П. Майорăв.

Конституци йачĕпе

1.

Йаш çын пек вĕри чĕрелĕ,
Йаш çын пек хитре хĕвелĕ
Йалтăртатрĕ кӳлĕре.
Мĕншĕн ирĕклĕн сывларăм?
Конституцине вуларăм,
Куртăм çĕнĕ ĕмĕре.
Нумай ĕмĕр халăх кĕтнĕ,
Ĕçлĕ массăшăн тивлетлĕ,
Çут хĕвел пек ĕмĕте
Буквăшаран çырса хунă,
Пуплевшерĕн çырса хунă
Сталин кĕнеки çине.
Çакă хаклă кĕнекешĕн
Революцисем кĕрленĕ.
Кайнă епĕр çапăçма.
Кайăпăр татах вăрçмашкăн.
Хатĕр епĕр сыхламашкăн
Çут телейлĕ çĕршыва.

2.

Тандашаймĕ нимĕскер те
Ман çĕршыв йĕмĕне.
Ун илемĕ — аслă Сталин.
Йешĕрен хулийĕ, йалĕ.
Ун илемĕ — çĕн етем
Çӳлерен çӳле вĕçессĕ.
Пур ĕçре те çĕнтерессĕ
Пирĕн харсăр çамрăксем.
Çут хĕвелĕ ăшă, теççĕ.
Сар хĕвелĕ çутă, теççĕ.
Çăмăр хыççăн, уйартсан.
Хĕвелтен те ăшăрах вăл.
Хĕвелтен те çутăрах вăл—
Йешĕрен çĕршывăм ман.
Ун ăшшийĕ — аслă Сталин.
Ун çуттийĕ — аслă Сталин.
Вăл шăратнă чăн телей.
Сив хĕлте те ăшатат вăл.
Сĕм каçра та çутатат вăл
Пур çĕре те, пур тĕле.
Улăп питĕ вăйлă, теççĕ.
Пур çынсем унтан тĕлĕнеççĕ.
Вуласан йумахсенче.
Улăпран хăватлă, вăйлă.
Пур вăйран хăватлă, вăйлă.
Ман çĕршывăм — çĕн тĕнче.
Унăн вăйĕ — аслă Сталин.
Ун хăвачĕ — аслă Сталин.
Вăл йертсе пырат пире.
Сĕр çитмĕл мĕлйунла халăх.
Сталин пек хĕрӳ вăйхаллă.
Çĕнетет тĕпрен çĕре.
Çутă киачĕ сывлăш витĕр.
Çурхи пĕлĕт — кăн-кăвак.
Нихăçан та сулхăм витмĕ
Çак телейлĕ çĕршыва.
Шыв йурлат, хăйне киленнĕн.—
Шăваратпăр тыр-пула.
Атăла та хал кӳлетпĕр.
Йухтаратпăр тăвала.
Сиятăмăн урса улат-и.
Йе сап-сара çу тăрат.—
Пур пĕрех çĕршывăн çачĕ
Йешĕрсе çеçке сарат.
Йалкăшат йалав мăнаçлăн
Сивĕ полюс варринче.
Вĕç ес. йурă. уçа саслăн.
Çĕнтерӳлĕн пит инçе.
Сталин шухăшĕ! Вăл маншăн
Хĕвелтен те пахарах...
Уншăн пурте çапăçмашкăн
Хатĕр епĕр йаланах.

А. ВАÇИЛИЕВ.

АРКАДИЙ ЕÇХĔЛ

ЕТЕМ ТИВЛЕЧĔ

Вырăссен паллă писателĕ Антон Павлăвич Чехăв хăйĕн „Мужики" йатлă калавĕнче етем тивлечĕ ĕлĕкхи саманара мĕн хисепре пулнине уйрăмах витĕмлĕн кăтартса панă.

„Мускаври „Славйан пасарĕ" йатлă гостиницăра ĕçлекен лакей, Николай Чикилдейĕв, чирлесе кайат. Унăн урисем чăлахланаççĕ, утти улшăнат, çапла пĕринче, коридор тăрăх пынă чух, вăл такăнат те ветчинапа пăрса хунă подноспа пĕрлех тĕшĕрлсе ӳкет. Ĕçрен тухма лекет. Хăйĕн тата арăмĕн мĕн чухлĕ укçа пулнă вăл пĕтĕмпех сывалас тесе емелленсе пĕтерет, тăранса пурăнма нимĕн те çук, ĕççĕр кичем пулса çитет ăна, вăл вара, тен, тăван киле, йала каймала пулљ тесе шутлат. Килте чирлеме те çăмăлрах, пурăнма та йӳнĕрех; килте стенасем те пулăшаççĕ, тесе ахалљ мар-çке калаççĕ".

Николай Чикилдейĕв, хăй çуралса ачалăхне иртернĕ йалĕнче, ăшшăн, кăмăллăн кĕтсе илессе шанат. Анчах вăл çемйипе тăван килне пырса кĕрсессĕн, хăраса ӳкет: кунта тĕттĕм, тăвăр, тасамар. Чикилдейĕвăн ĕмĕчĕ пĕтĕмпех хуçалат. Килмеле марччĕ йала, килмеле марччĕ, тет вăл хăй ăшĕнче. Анчах ăçта каймала?

Капиталисăмла хула пурнăçĕ таптаса амантнă Чикилдейĕв йалти тĕттĕм выçă шăтăкра тата ытларах чирлесе кайат. Тăванĕсем вăл часрах вилессе кĕтеççĕ: ытлашши çăвар, ахалљ çăкăр çĕртет. Çак инвалидăн арăмĕпе пĕчĕк хĕрĕ çеç, ашшĕ вилсен мĕн курассине пĕлсе, хăрушă кун çитесрен чĕтресе тăраççĕ.

Чикилдейĕв вилет, Олљгăпа Сашă (Чикилдейĕвăн арăмĕпе хĕрĕ) тĕнче тăрăх „христаради" ыйткалама тухса кайаççĕ.

Темиçе çĕршер пин çын, пайан пурăнмалăх çăкăршăн, çакăн пек хутаç çакса çӳренĕ кивĕ Российăн анлă талккишĕ тăрăх—йалтан-йала çитнĕ, чӳречерен-чӳречене пынă, чĕтрекен ырхан аллисене тăсса пурнăç ыйтнă.

Социалисăмла аслă Октябĕр революци пусмăрлă тискер пурнăçа тĕптурĕ. Çĕрĕн улттӑмаш пайĕнче хĕвеллĕ социалисăм çурчĕ ӳссе çитĕнчĕ. Çак çуртра мĕлйунлă халăхсем хăйсен телейне тупрĕç. Социалисăм пирĕн тăван кил пулса тăчĕ.

Сталинла Конституцин 121-мĕш статйинче çырнă: „ССР Сойузĕн гражданĕсен ватăлсан, çавăн пекех тата чирлесен йе ĕçлейми пулсан пурăвмашкăн пулăшу илмели права пур.

Ку права — рабочисемпе служăщисене государствă шучĕпе сарлакан социаллă страховани тунипе, ĕççыннисене тӳлевсĕр медицинăлă пулăшу панипе, ĕççыннисене усă курмашкăн курортсем нумай панипе пурнăçа кĕрсе пырат".

Пирĕн аслă совет çĕршывĕнче кирек хăш кĕтессе çит. есĕ çак статйа, чаплă Конституцин ытти ылттăн статйисемпе пĕрлех, ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пынине куратăн.

Антив пултăр, калăпăр, Вăрмар районĕнчи пысăк та мар, пĕчĕк те мар йал — Анаткас. Епĕр ăна суйласа илмен, пынă та кĕнĕ вăл йала.

Анаткас ытти йалсенчен нимĕнпе те уйрăмăн палăрса тăмаст.

Типçырма варрине вырнаçса ларнăскерне, ăна, укăлча картисем патне çывхарса çитсен тин куратăн. Айакран ...пăхсан ...а вракурăм пĕр тикĕсех выртат, нимĕнле Анаткас пурри те палăрмаст. Йал варрине кĕрсессĕн вара чул крепăçа кĕнĕ пек туйăнат, мĕншĕн тесен, йала виçĕ йенчен шапшур чуллă çырансем çавăрса илнĕ. Республикă аслă çулĕсене тума чул тата çĕнĕ стройкăсем валљи извĕç çакăнта кăлараççĕ.

Анаткасри чи ватă колхозник Петр Ваçилйĕвич каланă тăрăх, Анаткас çĕрĕсем çинче колхоз пуçланичченн тырпулă нихăçан та ĕретлĕ пулман иккен.

Унпала епĕр Конституци çинчен калаçатпăр. Вăл Конституци сăмаха çавăрса калаймаст, анчах халљхи саккун старикĕсен чĕрине майли çинчен хумхансах калат.

— Саккунĕ чĕре майлă вырт, тет вăл.—Мĕнле каламала—ĕлĕкхи чух ваттисене хăйĕн ачисем те питех пăхман. Ват çыннăн илемĕ çук ĕнтĕ ун, ĕçлеме пултараймаст, йăнăшса çӳрет. Халĕ ватă çынна килйышра мар, йалйышра та пăшăрхантармаççĕ. Ĕлĕкхи самана пулсан пире карчăкпа иксĕмĕре кам пăхмала-ха ĕнтĕ... Петр Ваçилйĕвич йăвăррăн сывласа илет те чĕлĕмне васкавлăнрах мăкăрлантарма тытăнат.

Вăл хăйĕн ывăлĕсем çинчен каласа парат. Асли Михаил „германљ" вăрçинче вилнĕ, кĕçĕнни Николай „белăйсемпе хытă çапăçнă", анчах киле таврăнман.

— Спаçипах йалйыша, йалйышра „обижат" тумаççĕ,—тет вăл татах. Йалйыш уншăн—колхоз, колхозниксен йышĕ.

Чăн та, Анаткасри „Париж Коммунĕ" колхоз ватçыннисемпе ĕç пултарулăхне çухатнисене, инвалидсене пулăшас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку ĕç колхозри пĕрне-пĕри пулăшакан кассă урлă пулса пырат. Кассă 1933 çулта организациленнĕ. Унта халĕ члента 213 çын тăрат, вĕсенчен хĕрарăмсем 117 çын—вĕсем ку тĕлĕшрен уйрăмах активлă. Пĕрне-пĕри пулăшакан кассăн тĕп фондĕнче халĕ укçан 1616 тенкĕ, тырăн 36 центнĕр пуйанлăх пур. Ку пуйанлăх çулсерен ӳссе пырат.

Петр Ваçилйĕвичăн чалăш пӳрчĕ 40 çул ларнă.

— Виличчен лайăх пӳрте кĕрсе курас çукчĕ пулљ, кассă пулăшман пулсан,—тет ватă колхозник.

Кассă Петр Ваçилйĕвичпа карчăкне çулсерен тырпул парса пырат, кăçал тата 250 тенкĕ укçа парса пӳрт лартма пулăшнă. Кăçалхи çул çакăн пек пулăшу 19 колхознике, иртнĕ çул 34 колхознике панă.

Акă, колхозник Ваçилий Андрейĕв куçсăрсен районри шкулĕнче вĕренет. Пĕрне-пĕри пулăшакан кассă ăна уйăхсерен 35 тенкĕ укçа тата çимелисем парса пырат. Мĕн курнă пулĕччĕ Андрейĕв ĕлĕкхи саманара?

Акă тата Захар Ваçилйĕв çемйи. Захар Ваçилйĕвич хăй те, арăмĕ те куçпа, сывлăх çуккипе аптраççĕ. Вĕсен çемйи пысăк—пилĕк ача, пилĕкĕш те вĕт-шакăрсем. Ĕлĕкхи саманара пулсассăн вĕсем çемйипех йе выçса, йе шăнса вилмеле. Халĕ çĕнĕ Конституци тăрăх, колхоз та, государствă та Захар Ваçилйĕв çемйине лайăх пулăшса пыраççĕ. Колхозри пĕрне-пĕри пулăшакан кассă Захар Ваçилйĕвича куçне сыватма укçа парса пулăшрĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл килхушшинче те пулин ĕçлеме пултарат, кăçал вăл колхозра 277 ĕçкунĕ тунă. Колхоз ăна пӳрт лартма вăй та, укçа та пачĕ. Захар Ваçилйĕвич йăхĕсем ĕмĕр хура пӳртре пурăннă, халĕ тин вĕсем çĕнĕ пӳрте кĕчĕç. Пӳртне Захар Ваçилйĕвич шалтан та тултан та шурăпа сăрларĕ—капла ĕнтĕ пурнăç илемлĕ, çутă, ачисем сывă ӳсеççĕ. Кусемсĕр пуçне, унăн çемйине йалсовет бӳджетĕнчен уйăхсерен пенçи тухса тăрат.

—Ан та асăн ĕлĕкхи çинчен, чун ырат,чĕре йунахат,—тет вăл.

Совет влаçĕ пулман пулсан Анаткас йалĕнче нумай çемйесем, нумай йăхсем пĕтетчĕç.

— Ех, ачам, —тет мана çурăмран лаппаса, çӳлерех асăннă чи ватă колхозник Петр Ваçилйĕвич, —çур йал ытла суккăр, выçă ларнă, ен астăвасса йалта хут пĕлекен пĕр çын та пулман. Ман атте туркăсемпе вăрçнă, вăл çыру йаратчĕ—çыруне пĕр-пĕр салтака çыртарнă пулљ ĕнтĕ... Çыру килетчĕ—йалта вулама пĕлекен çук. Кайаттăмăр вара Чулкассине, Сĕнтĕре—çыру вулаттарма...

Халĕ ĕнтĕ Анаткас пĕтĕмпех çĕнĕ йал. Кунта çамрăксем паттăрăн ӳсеççĕ, ваттисем те тайалмаççĕ. Ваттисене пулăшнишĕн тавтуса, мучисем, кинемисем, тепле чарсан та, ĕçех тухма тăрăшаççĕ. Хăйсен вăйĕсем çитнĕ таран ĕçлесе, кăçал, сăмахран 70 çула çитнĕ Клементйĕв Степан 120 ĕçкунĕ, 67 çулхи Давыдăв Никифăр 254 ĕçкунĕ тунă, ыттисем те вĕсенчен йуласшăн мар.

Анаткасра кăна мар, кирек хăш йала пырса кĕр, есĕ çав телейлĕ çынсенех куратăн. Пыр Çĕн Кавала, кĕр Христофорăв Назар патне, вăл сана ырă кăмăлпа кĕтсе илет. Вăл 23 çул производствăра ĕçленĕ, халĕ, инвалид шучĕпе, государствă ăна 192 тенкĕ пенçи парса тăрат. Кай çак районти Мăнçырма йалне, есĕ унта Георгий Николайĕвич учителе тĕл пулатăн. Вăл 30 çул учительре ĕçлесе мухтава тивĕçнĕ. Çĕнĕ Конституци тăрăх государствă ăна ăшшăн пулăшса пырат.

Пирĕн хаваслăха каласа пама хăш чух илемлĕ сăмах мар, „типĕ" цифрă лайăх пулăшат. Пĕр Вăрмар районĕнче кăна пенçионерсем соцстрах йенĕпе 206 çын уйăхне 11.156 тенкĕ, йал бӳджечĕ йенĕпе 79 çын çулталăкне 21.900 тенкĕ пенçи илсе тăраççĕ. Ку цифрăсем уйăхсерен прогрессивлă ӳссе пыраççĕ. Кусемсĕр пуçне, районри колхозсенче пĕрне-пĕри пулăшакан кассăсем 61 ĕçлеççĕ, вĕсенче 8.324 çын члента тăрат.

Социалисăм пирĕн çĕршывра чĕрĕ факт, чĕрĕ пурнăç пулса тăчĕ. Социалисăм кашни колхозник пӳртне, пирĕн ĕççыннисен йалинне хĕвел çути пек кĕчĕ.

Иртнĕ саманари тискер кунсемпе выçă вилнĕ Чикилдейĕвсем çинчен епĕр кĕнекесенче çеç вулатпăр. Вулатпăр та çав тискер кунсене ылханатпăр, халљхи ирĕклĕ тăван çĕршыва тата ытларах йурататпăр.

Халĕ пирĕн çĕршывра ĕçлекен çын тивлечĕ, таланчĕ, пултарулăхĕ чи пысăк хисепре. Ахальтен мар Анаткас йалĕнчи ватă колхозник Петр Ваçилйĕвич хăйĕн çĕнĕ пӳртĕнче пире телей паракан çулпуçĕн—Сталин йулташăн сăнне вырнаçтарнă.

Анаткас, Вăрмар р.

Канашри туллимар вăтам шкулта

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Çамрăк натуралиссен кружокĕн членĕсем Т. Каршĕвă тата Л. Красногă ученицăсем кăмпасене сăнаççĕ.

Г. Костин фото ӳкерчĕкĕ.

Йапони влаçĕсем пĕтĕм тĕнчери йăласене çĕнĕрен пăсни

ВЛАДИВОСТОК, декабĕрĕн 3-ш. (ТАСС). Кунта илнĕ сведĕнисем тăрăх, нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче Йапони тинĕсĕнче, „Америка" йатлă бухтă районĕнче Йапонин „Амакуса-Мару" карапĕ совет пулăçĕсене пилĕк çынна хăй çине илнĕ, вăл пулăçсем авари пулнипе инкеке лекнĕ пулнă.

Нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче Йапонири хаçатсем „Фукуи" тата ыттисем те çапла пĕлтернĕ: уçă тинĕсре, Оки утрав районĕнче авари пулнипе инкеке лекнĕ, шыв çуккипе тата выçăпа аптраса çитнĕ совет пулăçĕсене ултă çынна Йапонин „Михо-Мару" пăрахучĕ хăй çине илнĕ, тенĕ.

Çакăн пек чухне, пĕтĕм тĕнчери йăласем тăрăх, инкеке лекнĕ çынсене пулăшу параççĕ, вĕсене тăван çĕршывне таврăнма пулăшаççĕ, анчах Йапони влаçĕсем пулăçсене арестленĕ.

Йапони влаçĕсем хăйсен карапĕсем хăтарнă пулăçсем вырăнне совет влаçĕсем тытса чарнă йапонĕçсене, чикĕсене пăснăшăн тытса чарнăскерсене, улăштарса илме хăтланаççĕ.

Йапони влаçĕсем ăнсăртран инкек тӳснĕ çынсем тĕлĕшпе çапла киревсĕр хăтланнăшăн, пулăçсене етемле мар тыткаланăшăн вырăнти общественнăç çиллесе тăрăхат.

— o —

Сталинла Конституци кунĕ йачĕпе выставка уçăлнă

Мускаври В. И. Ленин йачĕпе тăракан государствă библиотекинче Сталинла Конституци икĕ çул тултарнă йатпа пысăк выставка уçăлнă. Выставкăн тĕп пайĕсем çаксем пулаççĕ: „ССРС—çĕнтерӳ тунă социалисăмăн çĕршывĕ", „ССРС гражданĕсен прависем тата обйазăннăçĕсем", „Коммунисcемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕн çĕнтерĕвĕ." Вуншар фотодокументсем, илемлетсе тунă диаграммăсем социалисăмлă государствă ӳссе чечекленни çинчен каласа параççĕ. Выставкăра—Конституцине Совет Сойузĕнчи пĕтĕм националнăçсен чĕлхисемпе, çавăн пекех тата Хĕвеланăç Йевропăри чĕлхесемпе кăларнă изданисем.

(ТАСС).

— o —

К. Йе. Ворошилăв йачĕпе тăракан çар академинчен вĕрентсе кăларни

К. Йе. Ворошилăв йачĕпе тăракан хими çар академийĕнче государствă екзамĕнĕсем тата дипломлă пройектсене хӳтлесси пĕтнĕ. Çитес вăхăтрах Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ пысăк квалификациллĕ çĕнĕ командирсемпе инженерсем туйавать.

Командăнăй факуљтетран вĕренсе тухнисем государствă екзамĕнне 20 процентĕ „пит лайăх", 60 процентĕ „лайăх" паллăсемпе панă.

(ТАСС).

Трактăриссен курсĕ

ИШЛЕЙ. МТС трактăриссен 5 уйăхлăх курсне организацилерĕ. Вăл курсра 22 çын вĕренет.

М. Сорокин.

Чехословакири лару-тăру

ПРАГА, декабĕрĕн 3-мĕш. Чехословаки республикин çĕнĕ президенчĕ Гаха пуçласа тунă ĕç—пĕтĕмĕшлĕ политикăлă амнисти пани пулса тăрат. 1938 çулти октăбĕр уйăхĕччен политикăлă преступленисем тунăшăн хупса хунă çынсене айăплас пирки пуçлавă пĕтĕм ĕçсене чарса лартаççĕ (декабĕрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа). Государствă умĕнче изменă, шпионла ĕç тунăшăн айăпламали ĕçсем ку шута кĕмеççĕ, мĕншĕн тесен, ун пек ĕçсем тăрăх амнисти парассине çар министрĕ килĕшӳ парсан çеç тума пулать.

Çĕнĕ правителствăн малтанхи ларăвĕнче економикă тĕлĕшĕнчи ыйтусене пăхса тухнă.

Премйер-министр Беран ĕнер депутатсен палатин председателне Мелипетра тата сенат председателне Соукупа йышăнса, вĕсене çапла каланă: çĕнĕ правителствă „парламентпа пĕрле туслăн ĕçлеме шухăшлать, анчах парламент ĕçĕсен хăвăртлăхне ӳстерме кирлĕ тесе шухăшлать",—тенĕ.

Фашисла аграрлă пичет „виççĕмĕш импери" умĕнче капитуљаци тăвасси çинчен, Чехословакин тулашри политикине „Рим—Берлин тĕнĕлĕпе" килĕшӳлĕн тытса пырасси çинчен пĕтĕм сасăпах каласма пуçланă, демократилĕ пичет тулашри политикăна урăхла май тытса пымала тесе уççăнах çырать. Сăмахран, легионерла „Народни особозени" хаçат пайан умстатйара çапла çырать: „Хаљхи вăхăтра тĕп вырăнта тăраканни çакă пулать: кăçалхи çентабĕр уйăхĕнче кĕрсе ӳкнĕ кризисран май килнĕ таран хăвăртрах тухасси, хамăрăн политикăна хамăр çĕршыв кăмăлланă пек тăвасси çинчен ĕлĕкхи сойузниксемпе çеç мар, тата кӳршĕсемпе те тӳрĕ кăмăлпа калаçса татăласси.

— o —

Иозеф Черны—„нацилĕ пĕрлĕх" партин руководителĕ

ПРАГА, декабĕрĕн 3-мĕш. Берана премйер-министра лартнă май, „нацилĕ пĕрлĕх" партин руководителĕ Иозеф Черны—организацилĕ комитет председателĕн заместителĕ пулать. Черны—Годжа кабинетĕнче шалти ĕçсен министрĕ пулнă.

— o —

Германипе Колумби хушшинчи дипломатилĕ хутшăнусем татăлнă

Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, Колумбин Германири ĕçĕсен поверенăйне тата Колумби миссин ытти членĕсене Германирен чĕнсе илнĕ.

Çыхăнусене татас умĕн çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Колумбин Германийе çĕнĕрен пынă посланникĕ Берлин центрĕнче йеврейсене хирĕçле погромсем тунин сценисене фотоаппаратпа ӳкерсе тăнă пулнă. Унăн дипломат машинине тытса чарнă, хăйне полици участкине илсе кайнă. Çакăн хыççăн Колумби посланникĕ хăйĕн верителнăй грамăтисене пама килĕшмен, вара Германирен тухса кайнă.

(ТАСС).

Шупашкар хула совечĕн 13-мĕш номĕрлĕ ача сатĕнче.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Жорж Баранăвпа Љонă Кирейĕв танкпа выљаççĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Италире фашисăма хирĕç кĕрешекенсене суд тунă

Римри фашисла трибунал çирĕме йахăн çынăн ĕçне хупă ларура пăхса тухнă, вĕсене фашисăма хирĕçле ĕçсем тунăшăн тесе айăпланă.

Суд умне тăратнă çынсене коммунисла организацисем тунă, коммунисла пропагандă сарнă, тесе айăпланă. Вĕсене пурне те вуншар çул хушши катăргăра ĕçлеттермеле тунă.

(ТАСС).

Финљанди верховнăй сучĕ лапуасĕцсене хӳтĕлет

Финљандин шалти ĕçсен министерстви лапуасĕцсен „патриотла халăх йухăмĕ" текен фашисла партине ĕçлеме чарса лартма решени йышăннă. Министерствăн çак распорйаженине Финљандин верховнăй сучĕ çирĕплетмен.

Верховнăй суд çакăн пек решени йышăннине пула, шалти ĕçсен министерстви хăйĕн малтанхи распорйаженине пăрахăçа кăларнă.

(ТАСС).

Монгол-Манчжурсен чаçĕсенчи восстани

Йапонĕçсем мобилизацилене монгол салтакĕсенчен тăракан полк виçĕ кун каялла йапонĕçсене хирĕç восстани тунă. Полка Хуан Цзе-и йертсе пырать. Полк Манчжоу-го çарĕсенчен тарса тухнă дезертирсемпе пĕрле Учуан хули çине (Гуйхуаран хĕрĕх километр çурçĕр-хĕвеланăç йенеле) атакă туса йапонĕçсенчен туртса илнĕ. Хула повстанĕçсен аллинче пĕр ерне хушши тăнă. Ерне иртнĕ çĕре йапонĕçсем повстанĕçсене хирĕç вăйлă çар отрйачĕ йанă. Çапăçура йапонĕçсем 100 çын çухатнă. Повстанĕçсем 400 лаша, 500 винтовкă, 10 пулемет, темĕн чухлĕ çар хатĕрĕсем туртса илнĕ. Çакăн хыççăн полк хуларан тухнă та Китай çарĕсем йенне каçнă.

(ТАСС).

Итали пичечĕн Францийе хирĕçле кампанийĕ

Италин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чиано декабĕрĕн 1-мĕшĕнче депутатсен палатин ларăвĕнче сăмах тухса калани çинчен, вăл сăмахра Францине хирĕçле çинчĕ сăмахсем пулни çинчен пĕлтерĕччĕ. Гитлĕр мрлавă тăрăх, Итали фашисĕсем Францин чылай çĕрĕсене туртса илме тăрăшаççĕ.

Францине хирĕç чарусăр кампани сарса пырса, Итали пичечĕ фашисла Италин йут çĕрсене туртса илес ĕмĕчĕсем çинчен пĕтĕмĕшпех каласа парать.

„Ресто дель Карлино" хаçат çапла çырать: „Итали хăй аллине илме шухăшлакан территорисем çинчен фашисла палатă депутачĕсем пĕтĕм ӳпке вăйне хурса кăшкăрни кирлĕ; радиостанцисем çак кăшкăрусене пĕтĕм тĕнчене сарса йани кирлĕ, çакна вара, йулашкинчен, демократисенчен пĕрин айхăлă руководителĕсем ăнланса илччĕр. Хаљ ĕнтĕ пурте пĕлеççĕ, Италин йут территорисем çине хапсăнас кăмăлĕ пур, çак хапсăнусене пурнăçа кĕртиччен вăл лăпланас çук".

Правителствă хаçачĕ „Джорнале д Италиа", фашисла хаçатсен хорне хутшăнса, Италин йут çĕрсене туртса илес кăмăлĕсем çинчен пит те уççăн каласа парать. „Итали,—тесе çырать хаçат,—кирлĕ пулсан, Францине хирĕç малала таппанса тухма та хатĕр".

(ТАСС).

Испани пăлхавçисен пиратла ĕçĕсем

Йулашки вăхăтра Испанири фашисла пăлхавçăсен çар карапĕсем Англине пурĕ 15 суту-илӳ прахутне тытса чарнă. Вĕсене пурне те пăлхавçăсем Кадикса, Малагăна, Сеутăна илсе кайнă. Çак пăрахутсенчен пĕри те республикăлă Испанине кайакансем пулман.

(ТАСС).

Совет ĕçĕнчи çĕнĕ кадрсем

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ райĕçтăвкомсемпе йалсоветсенче ĕçлекенсен çĕнĕ кадрĕсене курсенче вĕрентсе хатĕрлет. Çентабĕр уйăхĕнче Улатăрта 4 уйăхлăх курсран йалсовет председателĕсемпе çекретарĕсем 117 çын, нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче 2 уйăхлăх курсран йалсоветсенчи çекцисен руководителĕсем 21 çын вĕренсе тухнă.

Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче Патăрйелĕнчи курсран çекцисен руководителĕсене 58 çын вĕрентсе кăларнă.

Кусемсĕр пуçне халĕ Улатăрта совет работникĕсен курсĕнче йалсовет председателĕсем 100 çын, Кувшинкăра райĕçтăвком председателĕсемпе çекретарĕсем, хула совет председателĕсем 44 çын вĕренеççĕ.

Совет работникĕсен пĕр çул вĕренмели заочнăй курсĕнче йалсовет председателĕсемпе çекретарĕсем пурĕ 116 çын вĕренеççĕ. Вĕсем çак уйăхра пурте вĕренсе тухмала.

— o —

Колхозниксем мунча лартаççĕ

КУСЛАВККА. Ватнер йалĕнче ĕлĕк пĕр мунча кăна пулнă. Ăна та пулин çĕре чакаласа тунă. Вăл мунчара йалти çынсем пурте йĕркелĕ кĕрсе тăма пултарайман.

Хаљхи вăхăтра Ватнер йалĕнче 44 кирле 22 мунча. Колхозниксем мунчасене çулранах лайăхран та лайăхрах лартса пыраççĕ. Хаљ ĕнтĕ ернерен ернене мунча кĕмесĕр пурăнакан кил пĕрре те çук.

А. З.

— o —

Пурлăхсене ирĕккĕн страхлаççĕ

Кăçал Куславкка районĕнчи госстрах инспекцийĕ тĕрлĕрен инкек-синкек курнă колхозсемпе колхозниксене тата рабочисемпе служăщисене 227.332 тенкĕ парса пулăшнă.

Государствă страхованийĕ урлă пурлăхсене страхланин уссине ăнланса илсе, колхозсем, колхозниксем тата рабочисемпе служăщисем хушшинче харпăрхăй пурлăхĕсене ирĕккĕн страхлассин сарăлсах пырать. Туканашри „Канаш" колхоз хăйĕн пĕтĕм пурлăхне ирĕккĕн страхларĕ. Ку колхозра харпăрхăй пурлăхĕсене ирĕккĕн страхланă колхозниксем те нумай шутланаççĕ.

Аслă Сала йалĕнче госстрах инспектăрĕ Маркин йулташ государствă страхованийĕ çинчен халăха ăнлантарса панă хыççăн 92 колхозник харпăрхăй ĕнисене ирĕккĕн страхланă. Çак колхозра харпăрхăй пурлăхĕсене ирĕккĕн страхланă колхозниксем кăçал госстрахран 22.100 тенкĕ пулăшу илнĕ.

А. Зайцев.

— o —

Тĕнчери лару-тăру çинчен доклад

ЙЕПРЕÇ. Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче „Çиçĕм" колхозра парти райкомĕнчен пынă Тимофейĕв йулташ колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса пачĕ. Доклад итлеме пит нумайăн пухăнчĕç. Колхозниксем нумай ыйтусем пачĕç.

Колхозниксем тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе пит интересленеççĕ, ун çинчен час-часах докладсем туса пама ыйтаççĕ.

Г. Марушĕв.

Çĕнĕ кĕнекесем

Çак кунсенче Чăвашгосиздат çĕнĕ кĕнекесем пичетлесе кăларчĕ. Вăл кĕнекесен шутĕнче чăваш поечĕсен сăвă кĕнекисем тата шкулсем валљн учебниксем те пур. Акă вĕсем:

Уйăп Мишши — „Тăван çĕршыв", сăвăсен пуххи. Сборникре 45 сăвă. Вĕсем пурте пирĕн тăван çĕршывăн ӳсĕмĕсемпе, куљтурлă пурнăçĕпе çыхăнса тăраççĕ. Поетăн чи лайăх сăввисем, аслă Сталинпа Сталинла Конституци çинчен çырнисем, сборникре чылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Тираж 4000 екз., хакĕ 2 т. 10 пус.

Иван Малгай — „Сăвăсем", 47 стр., тираж 2000 екз., хакĕ 85 пус. Сборнике поетăн йулашки ик-виç çул хушшинче çырнă сăввисем кĕнĕ. Пурĕ 20 сăвă. Вĕсем тулли кăмăлпа пирĕн тăван çĕршывăн çитĕнĕвĕсем, унăн паттăр çыннисем, ывăлĕ-хĕрĕсем çинчен калаççĕ.

Джамбул — „Сăвăсем". Казахстан халăх йурăçи Джамбулăн сăвисене чăвашла куçарса уйрăм сборник кăларни питĕ пысăк ĕç. Джамбулăн творчĕствинче Сталин йулташ чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Халăх поечĕ Джамбул чĕререн тухакан сăмахсемпе аслă çулпуçăн мĕн пур генилĕ вăй-хăватне сăнласа кăтартать. Вăл халăх творчĕствин пуйанлăхĕпе те питĕ анлăн усă курать. Сборнике Уйăп Мишши, Тукташ, Йанкас, Митта Петĕрĕ куçарнă сăвăсем кĕнĕ—пурĕ 12 сăвă. Хакĕ 1 тенкĕ.

П. Н. Оçипăв — „Кулленхи çимфони". 5 пайлă (7 картинăлă) пйесă. Драматург ку пйесăра совет интеллигенцин пурнăçĕпе йăлисене уçăмлăн тата пур йенчен те ĕнентерӳлĕ сăнлăхсемпе кăтартса пама пултарнă. Ку пйесă хуласенчи профессионаллă театрсемшĕн çеç мар, йалсенчи драмкружоксемшĕн те пайанхи кун калама çук кирлĕ пйесă пулса тăрать. Анчах тираж питĕ те пĕчĕккĕ — 2000 екз. çеç. 88 стр., хакĕ 2 т. 50 пус.

М. Сироткин — „Чăваш литератури", вăтам шкулсем валљи литературă хрестоматийĕ. Пичетрен 5, 6, 7-ш классем валљи çак уйăхра тухнă. Хрестоматире чăваш писателĕсен произведенийĕсем, вырăссен тата Казахстан йурăçи Джамбулăн паллă произведенийĕсем кĕнĕ. Кусемсĕр пуçне, 5-мĕш класăн хрестоматине чăваш фољкљорне те кĕртнĕ. Кĕнекесем перепљотпа тата йӳнĕ хакпа тухнă.

Калас пулать, ку хрестоматийĕн çитменлĕхĕсем те пур. Чăваш чĕлхипе тата литературипе ĕçлекен учителсем çак хрестомати çинчен пичет урлă тухса калаçсан пит аван пулĕччĕ.

Асăннă кĕнекесене Шупашкарти тата район центрĕсемпе йалсенчи кĕнеке магазинĕсенче тупса илме пулать.

Ник. Дедушкин.

Библиотекăра кĕнекесем сахал

Шĕнерпуçĕнчи (Сĕнтĕрвăрри районĕ) колхоз çамрăкĕсем кашни каçах вулав суртне пухăнаççĕ. Кунта вĕсем хаçат-журналсем вулаççĕ, ушкăнпа радио итлеççĕ. Пушă вăхăта çамрăксем куљтурăлă ирттерме тăрăшаççĕ.

Анчах вулав çурчĕн библиотекинче художествăлă литературă çукпа пĕрех. М. Горкий, Пушкин, Н. Островский тата ытти писателсен произведенийĕсем библиотекăра çук. Йалсовечĕн библиотекăна пуйанлатмала.

А. Григорйĕв.

Заводскайа йалĕ

Шупашкартан тухса кукăр-макăр авкаланса йухса выртакан Чебоксаркă шывĕ хĕррипе хĕвеланăçнеле кайсан, есĕр пысăк та илемлĕн ерешленĕ çуртсемлĕ йала пырса кĕретĕр. Вăл—орденлă Чăваш республикĕнчи пуйан та куљтурăлă пурнăçпа пурăнма пуçланă йалсенчен пĕри—халĕ çĕнĕ йат илнĕ Заводскайа йалĕ.

Ваттисем каланă тăрăх, пĕр виççĕр çул кайала ку вăрманлă вырăнта тĕне кĕртесрен хăраса таçтан тарса килнĕ Протопоп йатлă çыннăн килйышĕ пытанса пурăннă. Çавăнтан вара Протопопихă йалĕ пуçланса кайнă,—теççĕ. Ку халап тĕрĕсси, тĕрĕс марри—вăл пире халĕ кирлех мар, пире унăн пайанхи сăн-сăпачĕ интереслентерет. Унта тĕлĕнмеле çĕнĕ пурнăç чечекленет, унта çĕнĕ çынсем çитĕнеççĕ.

Ку йалта та ĕлĕк пурнăç кичем те хурлăхлă тата сĕм каç пек тĕттĕм пулнă. Телейлĕ те хаваслă пурнăçпа хĕпĕртесе пурăнакан колхозниксем хăйсен йалĕн аваллăхне аса та илесшĕн мар: мĕн тăвас унпа? Ăна аса илсен, чун хурланать,—теççĕ вĕсем. Çавăнпах ĕнтĕ йалăн кивĕ йатне улăштарнă.

Чăнах та, иртнине чуна хурлантармасăр асăнма йăвăр. Çапах калас пулать: иртнипе танлаштарса пăхсан, хаљхи пире тата та çутăраххăн, тата уççăнрах курăнать, пире пусмăрлă пурнăçăн аваллăхне сĕтĕрекен ирсĕр тăшмансемпе кĕрешес хăват татах та ытларах çивĕчленет.

Пĕр хĕрĕх виçĕ çул ĕлĕкрех Протопопихăра вулама-çырма пĕлекен çын пулман. 1895 çулта чиркӳ прихочĕн шкулне уçни те хут пĕлменлĕхе пĕтерме пулăшман. Йалти халăхран 90 процентĕ вĕренмесĕр йулнă. Шкул çурчĕ пĕчиккĕ пирки унта çирĕм ачаран ытла вĕренме пултарайман. Чималтан, паллах, кулак ачисене илнĕ, ыттисене кайала çавăрса йанă:—Вырăн çук,—тенĕ.

Ватă колхозник Павел Глухăв йулташ çав шкул çинчен çапла каласа пачĕ:

— Мана шкул уçнă çулах вĕренме кайма тӳрĕ килчĕ. Шкул хурал пӳртĕнчеччĕ. Каçхине халăх пухăнса тапак тĕтĕмĕпе тултарса хăваратчĕ, ирхине çав сăртрах епĕр вĕренеттĕмĕр...

Халĕ Заводскайăри çичĕ çул вĕренмели шкулта 308 ача вĕренет. Çитĕннисем хушшинче те хутпĕлменлĕхе пĕтернĕ. Ку шкулсăр пуçне, 1936 çулта куљтурă çурчĕ лартнă. Куљтурă çуртĕнче пухусем ирттермели пысăк зал, библиотекăпа читаљнă пӳлĕмĕсем, хăта лаборатори тата столовăй пур.

Колхозниксем пушă вăхăта куљтурăлă ирттереççĕ. Уйăхра виçĕ хут кино кураççĕ, хăйсен вăйĕпе спектакљсем, концертсем лартаççĕ. Григорйĕв, Григорйĕвă, Дмитрийĕвă, Петровă, Глуховă, Парамонăв колхозниксем—драмкружокăн чи активлă членĕсем колхозра лайăх артиссем вырăнĕнче шутланаççĕ.

Йалăн куљтурăлă ӳсĕмĕ колхоз ӳсĕмĕсемпе тачă çыхăннă. Шупашкар районĕнче пĕрремĕш вырăнта шутланакан колхоз — Заводскайа çыннисемшĕн пуйан та куљтурăлă пурнăçăн çăлкуçĕ пулса тăрать.

Тырă акассипе выращассинчен пуçласа çилос валљи улам-курăксем турасси таранах—пур ĕçе те машинăпа тăваççĕ. Авăн çапнă чухне двигателпе усă кураççĕ, ун вăйĕпе пĕр вăхăтрах виçĕ молотилкă ĕçлеме пултарать. Çапла тувипе ĕç вăйне нумай перекетлеççĕ.

Итемрен инçе мар, тийенĕ лавсене виçме пысăк тараса вырнаçтарса лартнă. Земљанкăра пĕр çын лавсем мĕн чухлĕ тайнине кĕнеке çине паллă туса ларать.

Ĕçе çапла лайăх организацилесе колхоз пур ĕçсене те вăхăтра туса пырать. Государствă умĕнчи обйазателствăсене пурне те Октăбĕр уйавĕччен тултарнă. Халĕ тупăша валеçеççĕ.

Ку колхозра, хăть ăçта пырсан та, пысăк организацилĕхпе йĕркелĕхе куратăн. Акă лашасен вити. Унта тĕреклĕ те самăр лашасем кашни уйрăм пӳлĕмре тăраççĕ. Вите ăшне таса тытаççĕ. Коњухсем пурăнакан çуртра радио пур, сĕтел çинче тĕрлĕрен кĕнеке-хаçатсем выртаççĕ.

Таварлă сĕт-çу фермине пырсан, унта та çакăн пек йĕркелĕх куратăн. Çавăнпах ĕнтĕ, лайăх пăхнăран, вĕсен ĕнисем сĕт нумай параççĕ.

— Пĕр çепаратăр ĕлкĕрейместь, тепре илме шутлатпăр-ха,—тет колхозăн счетоводĕ.

Машинăсене лартмали пысăк гараж пур, вĕсене пурне те çавăнта типтерлесе лартнă, туртăхма пултаракан вырăнсене çупа сĕрнĕ.

Гараж умĕнчи тимĕрç лаççинче халĕ хĕрӳлĕ ĕç пырать: машинăсене йусаççĕ. Çавăнтах зеркаљнăй карп йатлă пулă ĕрчетме йатарласа пĕвеленĕ пысăк пĕве таçта çити тăсăлса выртать. Колхоз куллен ӳсе пынипе пĕрле колхозниксен пурнăçĕ пуйанланса, куљтурланса пырать. Колхозниксенчен нумайăшĕ çĕнĕ пысăк çуртсем лартнă. Чӳречесем умĕнче хĕлĕн-çăвĕн чечексем йешĕрсе ларăççĕ. Иаланах радио сассине илтетĕн. Иалти килсенчен 90 процентĕнче радио пур. Ĕнесĕр кил çук, нумайĕшĕсем икшер ĕне тата ытти выљăх-чĕрлĕхсене йышлăн усраççĕ.

Çакăн пек ырă пурнăçшăн Заводскайа йалĕн колхозникĕсем совет влаçĕпе коммунисла партине тата Сталин йулташа чĕререн тав тăваççĕ. Вĕсем Сталинла Конституци кунĕнче хăйсен куљтурă çуртĕнче савăнăçлă пултарулăх вечĕрне ирттереççĕ.

Усли Васлейĕ.

Ответлă-редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

ОРГАНИЗАЦИСЕМПЕ УЙРĂМ ПОДПИСЧИКСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

КОГИЗ-ăн ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ УЙРĂМĔ

1939 ÇУЛШĂН ÇАКĂН ПЕК ЖУРНАЛСЕНЕ ÇЫРĂНСА ИЛМЕ ПОДПИСКĂ ИЛНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ:

Социалă-економикăлă, художествăлă литературă, çар, медицинă, йалхуçалăх, физкуљтурă, профсойуз, искусствă тата кино, промышлĕннăçпа транспăрт, суту-илӳ ыйтăвĕсем тăрăх; издателствăсем: «Всесоюзная книжная палата», «Варнитсо», «Госарбитраж», „Госпланиздат», «Ведомости Верховного Совета СССР», „Фотоиздат», «Что читать», «Книжные новости», «Бюллетень марксистско-ленинской литературы», «Новости техники».

Çак журналсене вăхăтра çырăнса илме васкăр, вăхăтра çырăнсан журналсем йĕркелĕ килсе тăраççĕ.

Подпискăна КОГИЗ-ăн çак магазинĕсенче илеççĕ:

Шупашкарта, Улатăрта, Канашра, Çĕмĕрлере, Йетĕрнере, Çĕрпӳре, Сĕнтĕрвăрринче, Куславккара, Патăрйелĕнче тата КОГИЗ-ăн Бибколлектăрĕнче.

КОГИЗ магазинĕсенче пуринче те каталогсем пур, çав каталогсем тăрăх подписчиксем журналсем çинчен тĕплĕн пĕлме пултараççĕ.

Шупашкара—„Книга—почта" тесе заказсем йарăр.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 578. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР., заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л.